... им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАРТ 1 ЫТЛАРИКУН 49 (4861)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйăн 6—23

Çынвĕлеренсен, шпионсен, тăван çĕршыва сутакансен „сылтăмла-троцкисла блокĕ“

Пайан епĕр ССР Сойуз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегин уçă суд ларувĕнче кăçалхи мартăн 2-мĕшĕнче „сылтăмла-троцкисла блок“ йатлă заговорла ушкăнăн преступленилĕ ĕçĕсене пăхса тухасси çинчен ССР Сойузĕн Прокуратури пĕлтернине пичетлесе кăларатпăр. Шпионла, сăтăрла, диверçилĕ тата террорла ĕçшĕн айапласа Н. И. Бухарина, А. И. Рыкова, Г. Г. Йагодана, Н. Н. Крестинскине, Х. Г. Раковскине, А. П. Розенгољца, В. И. Иванова, М. А. Чернова, Г. Ф. Гриљкова, И. А. Зеленскине, С. А. Бессонова, А. Икрамова, Файзулла Ходжайева, В. Ф. Шаранговича, П. Т. Зубарева, П. П. Буланова, Л. Г. Левина, Д. Д. Плетнева, И. Н. Казакова, В. А. Максимова, П. П. Крючкова суд урлă ответ тыттараççĕ.

„Сылтăмла-троцкисла блокра“ пĕрлешсе тăнă тискер çынвĕлеренсен, шпионсен, фашисла заговорщиксен банди тунă ирсĕр заговор çинчен, чуна пăр пек сивĕ çаптаракан хăрушă преступленисем çинчен пĕлсен, пĕтĕм тĕнчери çĕршер мĕлйун рабочисем, хресченсем, тӳрĕ кăмăллă интеллигентсем тарăхса та йĕрĕнсе çӳçенсе илĕç.

ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн мухтавлă оргăнĕсем тупса тăрă шыв çине туртса кăларнă тата халь суд аллине панă ирсĕр заговорщиксем чылай çулсем хушши йутçĕршыв разведкисен службинче шпион пулса пурăннă. Совет халăхĕн чи усал тăшманĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен тăшманĕ—Троцкий пытанса пурăннă витĕнчĕке следстви вĕçне çитиех уçса палăртать. Вăл ĕнтĕ 1921 çултанпах пĕр йутçĕршыв разведкишĕн ĕçлесе тăнине тупса палăртнă. 1926 çултанпа Троцкий тепĕр йутçĕршыв разведкине сутăнна.

Троцкий, Бухарин, Рыков тӳррĕмĕнех пана задани тăрăх, уйрăм йутçĕршыв государствисен генераљнăй штабĕсенче пысăккăн шухăшласа хатĕрленĕ плансем тăрăх, „сылтăмла троцкисла блокра“ пулнисем ССР Сойузĕнче шпионаж туса пурăннă, сăтăрла, диверçилĕ тата террорла ĕçе пурнăçа кĕртсе тăнă.

Вĕсем совет халăхĕн йуратнă ывăлне, нихăçан асран кайми хаклă Сергей Миронович Кирова вĕлерме шут тунă, вĕлерме хатĕрленнĕ тата вĕлернĕ. Вĕсем бољшевиксен партийĕпе совет правителствин руководителĕсен пурнăçе çине тапăнма хатĕрленнĕ. Тӳрĕ çынсем шухăша та илме пултарайман чи йĕрĕнчĕклĕ майсемпе, фашиссем, пӳтсĕр-врачсем пулăшнипе вĕсем В. В. Куйбышев, В. Р. Менжинский, А. М. Горький йулташсене тискеррĕн вĕлернĕ.

Вĕсем халăх ĕçне чунтан-чĕререн йуратса коммунисăмшăн кĕрешекенсем çине вырăссен аслă писателĕ Алексей Максимович Горький çине кашкăр пек усаллăн хайарланса алă çĕкленĕ. Çак вăл фашисла кайашсем аслă та пархатарлă çынсене, хăйсен пĕтĕм пурнăçне нимĕн йулмиччен ĕç етемлĕхне панă çынсене ирсĕрĕн тавăрни пулнă.

Горький хулинче суйлавçăсем умĕнче каланă хăйĕн сăмахĕнче Йежов йулташ Сергей Миронович Кирова вĕлерни пирки çапла каланă: „Çак çухатушăн епĕр нихăçан та каçарас çук. Троцкисла-бухаринла шпионсен йытушкăнĕ Киров йулташ пуçĕшĕн пире хаклă тӳлĕ“.

Куйбышев, Менжинский, А. М. Горький йулташсен тĕлĕнмеле чаплă та çутă пуçĕсемшĕн те „Сылтăмла-троцкисла блокри“ çынвĕлеренсем хаклă тӳлĕç. Çакăн пек вĕлернисем вĕсем капиталисăмлă тискер кайăксен пирĕн тăван çĕршыва чураллантармали шуйттанла планĕн пĕр пайĕ пулнă. Троцкий, Бухарин, Рыков тата ытти сутăнчăксем империалисăмлă завхатчиксене вăрçăра Хĕрлĕ Çара çĕнтерсе пăрахмала тума сăмах панă—çавăн пек çĕнтермеле тума вĕсем çар вăрттăнлăхĕсене панипе, шпионаж тунипе, диверçилĕ тата террорла актсем тунипе хатĕрленсе пынă.

Троцкий, Бухарин, Рыков тата ытти сутăнчăксем империалисăмлă захватчиксене ССР Сойузне татăкан-татăкан пайлама, унран Украинăна, Белоруççине, Вăтам-Азири республикăсене, Грузине, Арменине, Азербайджана, Инçет-Хĕвелтухăçĕнче Приморйене татса илме сăмах панă—вĕсем буржуалă националиссемпе, империалисăм агенчĕсемпе пĕр каварлă пулса çавăн пек татса илме хатĕрленнĕ.

„Сылтăмла-троцкисла блок“ професçилĕ сăтăрçăсен, диверсантсен, шпионсен, çынвĕлеренсен ирсĕр банди пулнă, вĕсем хăйсен умне ССР Сойузĕнче ĕлĕкхи пек капиталисăм туса хурас тĕллев лартнă. ССР Сойузĕнче çĕмĕрсе тăкса пĕтерсе хунă експлоататорла классенчен тата халăхшăн тăшманла партисенчен йулнă мĕнпур сволăча çав „блок“ хăйĕн речĕсене пуçтарнă. Следстви тупса палăртнă пек, „сылтăмла-троцкисла блока“ есерсемпе меншевиксем, буржуалă националиссем тата патша охранинчи провокаторсем йĕрĕнчĕк чăмăркка пулса пĕрлешнĕ.

Çак пĕтĕм бандитсене, шпионсене, провокаторсене вĕсем социалисăмла, бољшевиксен партине, социалисăмла обществă тăвакан совет халăхне урнă пек, хайарран, тискеркайăкла курайманни пĕрлештерсе тăнă, халь те çавах пĕрлештерсе тăрать. Преступленилĕ йытушкăнĕн пĕр ирсĕр ĕмĕт пур—ĕлĕкхи пек капиталисăмлă йĕрке туса хурас, влаçа буржуази аллине—çĕрулпучĕсене, капиталиссене, кулаксене тавăрса парас ĕмĕт пур. Вĕт, заговорщиксем хăйсем пĕтĕм пурнăçĕнче капиталисăм интересĕсемшĕн тăрăшнă. Капитал тарçисем,—вĕсем ирĕклĕ совет халăхне вилесле курайман, вырăс халăхĕ çинчен бухаринла ирсĕр елек сарнă—кахалсен халăхĕ, вĕсене капиталиссемпе çĕрулпучĕсен чăпăркки кирлĕ текен елек сарса пурăннă.

Вĕсем йутçĕршыв разведкисем пулăшнипе буржуази килессине хатĕрленĕ. Фашисла буржуази вĕсене хăйсен шпионĕсемпе диверсанчĕсен малта пыракан отрйачĕ вырăнне шутласа тăнă, вĕсем пулас вăрçă вăхăтĕнче „пилĕкĕмĕш колоннă“ пуласса шанса тăнă. Кирова вĕлернĕ хыççăн, Куйбышева, Менжинскине, Горькине тискеррĕн вĕлернĕ хыççăн вĕсем мĕлйуншар рабочисемпе хресченсене вĕлерме, совет хулисене аркатса пĕтерме, совет завочĕсемпе колхозĕсене пĕтерсе лартма шухăшласа хунă.

Вĕсен ирсĕр ĕмĕчĕсем нихăçан та пурнăçа кĕрес çук! Тăван çĕршывпа халăха çивчĕ куçпа сыхласа тăракан мухтавлă, чаплă совет разведки троцкисла-бухаринла бандăн ирсĕр ĕçне çапса татрĕ. Сылтăмла-троцкисла бандăна аркатса тăкни вăрçăра тунă пысăк çĕнтерӳпе танлашать.

Судпа айăпланакансен тенкелĕ—„сылтăмла-троцкисла блокăн“ намăслă çулĕн йулашки тапхăрĕ. Совет халăхĕ вăл бандитсен йачĕсене ĕмĕрлĕхех намăспа та курайманлăхпа питлерĕ. Çак чи хайар та усал предателсем хăйсене кирек мĕнле йатпа, сылтăмрисем тесе-и йе „сулахайрисем“ тесе-и, чĕннĕ пулсан та, вĕсем йаланах совет халăхĕ çине тылран тапăннă. Ĕççыннисен влаçне тӳнтерсе пăрахма хăтланас шутпа, вĕсен çĕнтерӳвĕсемпе çитĕнӳвĕсене çĕмĕрме, çĕршывпа халăха кайала, буржуази пуç пулса тăнă вăхăтсем патне тавăрма хăтланса, вĕсем рабочисемпе хресченсен геройла кĕрешӳвĕнче пулнă йăвăрлăхсемпе уса курнă.

Следстви çакна палăртнă: 1918 çултах, Октябĕр революци хыççăнах, Брестра килĕшӳ тунă тапхăрта, Бухаринпа бухаринцăсем Троцкипе тата „сулахай“ есерсемпе пĕрле В. И. Ленина, совет правителствин пуçлăхне, хирĕç заговор организациленĕ. Вăл ирсĕр йытăсем Брестри килĕшӳве аркатса йарас, совет правителствине сирпĕтсе антарас, В. И. Ленина, И. В. Сталина, Й. М. Свердлова арĕслесе вĕлерес тĕллев тытнă пулнă.

Ленина тата совет влаçне хирĕç тунă çак преступленисене кура, троцкиссемпе бухаринцăсем совет халăхне хирĕç тунă ирсĕр ĕçсем уçăмлăн тата йăнланмала курăнса тăраççĕ.

Заговорщиксене хăйсен хура шухăшне пурнăçа кĕртме май килмерĕ. Анчах вĕсем йна пăрахман. Рабочисемпе хресченсен çĕнтерӳвĕсем, совет влаçĕ тĕреклense пыни, капиталисăмлă классене пĕтерни, социалисăм çитĕнӳвĕсемпе триумфĕ халăх тăшманĕсене ытларах та ытларах хайарлантарнă. Вĕсем совет çĕршывне социалисăмла индустрилес ĕçе аркатса пăрахма хăтланчĕç, йалхуçалăхне коллективизацилес ĕçе аркатса пăрахма хăтланчĕç. Парти, Ленинла-Сталинла Тĕп Комитет йертсе пынипе, капиталисăмлă реставраци проповедникĕсем, контрреволюци агенчĕсем, урса кайнă кулаксен пуçлăхĕсем пулса тăракан троцкиссемпе бухаринцăсене ывăнма пĕлмесĕр тăрă шыв çине кăларса пынă.

Пĕтĕм халăх умĕнче вĕсен чăнчăн сăн-пичĕ мĕн таран ытларах уçăлса пынă, вĕсен бољшевикла партине хирĕç курайманлăхĕ те çав таранах вăйлăланса пынă. Маскăпа витĕнсе, икĕ-питленсе, чи ирсĕр мелсемпе усă курса, троцкиссемпе бухаринцăсем урса кайнă бандитсем, кĕтесрен сыхласа перекен фашисла çынвĕлеренсем, шпионсем диверсантсем пулса тăчĕç. Вĕсем совет халăхĕпе, хамăр тăван çĕршывпа нимĕнле те çыхăнса тăмаççĕ. Судпа айăпланакансен тенкелĕ çинче вĕсем тăван çĕршыва сутакан ирсĕрсем пек, фашисла разведкăсен тарçисем пек, çĕр чăмăрĕ çинчи тӳрĕ чунлă çынсем хушшинче вырăн йышăнса тăма тивĕçлĕ мар етемсен йăхĕ пек лараççĕ.

Çав кайашсем тунă преступленисем чăннипех те тĕлĕнмеле ирсĕр. Совет сучĕ вĕсене тивĕçлипе наказани парĕ, ун пирки иккĕленмели çук. („Правда“ умсăмахĕ).

Финанс активĕпе ĕçлемеççĕ

Вăрмар районĕ укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе кайа йулса пырать. Пуринчен ытла кунта займ укçине йапăх пухаççĕ.

Ку ыйтупа массăлă ĕçе йĕркелемен. Йалсенче, колхозенче партипе комсомол тата профсойуз организацийĕсем займ сарнă вăхăтра массăлă-ăнлантару ĕçне тивĕçлипех туса пынă пулсан, халĕ—займ укçине пухнă чухне, вăл ĕç пачах та курăнмасть.

Райфинпай финанс активне çухатса пĕтернĕ. Чылай йалсоветсенче (Арапуç, Кив Вăрмар, Çĕн Кавал т. ыт. те) займ укçине пухма уйăрнă уполномоченнăйсем нимĕн те тумаççĕ.

Социалисăмла ăмăрту кунта тивĕçлĕ хисепре тăмасть-ха. Укçа-тенкĕ пухас, уйрăмăнах займ укçи пухас тĕлĕшпе пĕр йалсовет та, çекци те, пĕр уполномоченнăй та ăмăртни çук.

Финанс работникĕсене те социалисăмла ăмăртăва хутшăнтарман. Финанспа банк работникĕсен Сойузĕн вырăнти комитечĕ хăйĕн членĕсене займ укçине пухас ĕçре пулăшса пыма уйрăм йалсоветсем çумне çирĕплетсе тухнă. Анчах вĕсем нимĕн те туман.

Акă, Çĕн Кавал йалсоветнех илер. Вăл район центăрĕнчен инçе мар—икĕ километр кăна. Финанспа банк работникĕсен сойузĕн членĕсем вăл йалсоветра час-часах пулаççĕ, анчах займ укçине пухас ĕçре пĕре те пулăшмаççĕ. Ку йалти „Çĕнтерӳ“ колхозри колхозниксем пурĕ 1350 тенкĕлĕх займ çыраннă. Займ укçине пухас тĕлĕшпе ĕçлемен пирки, февралĕн 15-мĕшчен мĕн пурĕ те 55 тенкĕ кăна пухнă. Тивĕçлипе ĕçленĕ пулсан, займ укçине тахçанах пухса пĕтерме май пулнă. Акă, февралĕн 15-мĕшĕнче йала финанс работникĕсем пынă, вĕсем колхозниксем хушшинче массăлă-ăнлантару ĕçне йĕркеленĕ май, пĕр кунтах займ укçи 500 тенкĕ пухнă.

Çавăн пекех Арапуçĕнче те займ укçине пĕр кун хушшинчех 300 тенкĕ пухнă.

Районра хăшпĕр колхозсенче займ укçине вăхăтра пухса пыраççĕ. Акă, „Париж Коммунĕ“ (Анаткас йалсоветĕ) колхознех илер. Ку колхоз займ укçине пуринчен малтан пухса çитерчĕ.

Çав вăхăтрах „Комбайн“, „Коминтерн“ тата „Пионер“ колхозсем займ укçине пĕр пус та пухман. Райфинпайăн çакăн пек йулса пыракан колхозсемпе йалсоветсене ытларах пулăшас пулать. Райфинпай работникĕсен вырăнсенче чи малтан финанс активĕпе çыхăнса, йалсоветсемпе колхозсене, çекцисене тата займ уполномоченнăйĕсене социалисăмла ăмăртăва хутшăнтарас тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлемеле.

Мосолов.

В. И. Молотов йулташ çĕрĕç работникĕсен канашлăвĕнче тухса калани

Февралĕн 21-мĕшĕнче çĕрĕç оргăнĕсенчи йертсе пыракан работниксен канашлăвĕнче ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Молотов йулташ çураки кампани ыйтăвĕсем тăрăх сăмах каланă.

Молотов йулташ çапла каланă:

Колхозсемпе совхозсем, иртнĕ çул 7 мĕлйарда йахăн тĕштырă туса илсе, пысăк çитĕнӳсем турĕç. Кăна тумашкăн çутçанталăк условийĕсем лайăх пулни пулăшрĕ. Анчах, çанталăк пирĕншĕн малашнехи валљи нимĕн те сĕнсе хуман. Епĕр пĕлетпĕр, лайăх тухăçлă тырпул туса илес ĕçре тĕп вырăнта тăракани халь ĕнтĕ пиртен хамăртан, епĕр мĕнле ĕçленинчен, колхозсен организацилĕхĕнчен килет. Çĕрĕç оргăнĕсемпе МТС работникĕсен кăçалхи çул 7 мĕлйард пăтран кайа мар, а нумайрах тĕштырă туса илессине пурнăçлас пулать, çакна тунипе вара парти çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илесси çинчен кăларса тăратнă лозунга ĕçре пурнăçа кĕртес пулать.

Пирĕн çĕрмамăк тăвас тĕлĕшпе ĕçлекенсен çитĕнĕвĕсем çĕршыва кирлĕ чухлĕ çĕрмамăк парса тăрас ĕçре тĕпренех улшăну турĕç. Халь пирĕн чылай пысăк çĕрмамăк запасĕсем пур, ун пек запассем пирĕн халиччен нихăçан та пулман. Çĕрмамăк-пиравăр промышленнăçĕ, çĕрмамăкĕнчен кирлĕ таварсем туса кăларма ĕлкĕреймесĕр, событисен хӳрипе тăрса йулчĕ. Халь ĕнтĕ епĕр хамăрăн пĕтĕм пиравăр промышленнăçне часрах çĕклесе йарассишĕн, хуларипе йалти халăха кирлĕ пиравăрсем часрах çителĕклĕ таран парассишĕн вăй хурса тăрăшатпăр. Çĕрмамăк-пиравăр промышленнăçĕ хăвăрттăн малала кайассине епĕр шанса тăратпăр. Çакна кура пирĕн, çĕрмамăк запасĕсем ан сахаллачăр тесе кăна мар, вĕсем тата ытларах ӳссе пыччĕр, тесе тата ытларах тăрăшас, ĕçлес пулать.

1938 çул—сахăр чĕкĕнтĕрĕн тухăçлăхне татах ӳлеле çĕклемели çул пулса тăма тивĕç. Сахăр чĕкĕнтĕрĕн тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе иккĕмĕш пйатилеткăра тума панă заданине пурнăçа кĕртесси патне епĕр пĕлтĕр çывăха пырса çитрĕмĕр. Кăçал, виççĕмĕш пйатилеткăн пĕррĕмĕш çулĕнче, пирĕн виççĕмĕш пйатилеткăна тивĕçлĕ тухăçлăхшăн çапăçас пулать.

Йĕтĕн туса илес ĕçре епĕр пит те кайа йулнă. Кунта тухăçлăх намăслантармалах пĕчĕккĕ. Куна, сылтăмла-троцкисла тата есерла сăтăрçăсенчен йулнă йапалана, пĕтерес пулать. Тавайăр-ха йĕтĕн тухăçлăхне хăпартассишĕн кĕрешӳве лайăх, мĕлйуншар колхозниксем, пирĕн пĕтĕм государствă ыйтни пекех лайăх сарса йарар.

Çĕрулми тата пахча-çимĕç туса илес ĕçри задачăсем çинчен каласа, Молотов йулташ çакна кăтартса панă: 1938 çул—çĕрулмине пĕр облăçран тепĕр облăçа, инçетри вырăнсене турттарса çӳрессине пĕтерсе хумали çул пулмала. Çав калама çук пысăк турттарусенчен чукунçулсене хăтарас пулать. Пур облăçсемпе республикăсен те кирлĕ чухлĕ çĕрулмине вырăнсенчех, хăйсем акакан çĕрсем çинче туса илмеле.

Çураки мĕнле иртме пултарассине хаклаСа, Молотов йулташ çакна кăтартса панă: кăçалхи çул çуракине çитĕнӳлĕн иртерме кирлĕ условисем халиччен пулнинчен чылай лайăхрах.

Сăмахран, ĕлĕк пулнă йăвăрлăхсем—вăрлăх çитменнипе çыхăнулă йăвăрлăхсем халь çук. Анчах тырпул тухăçлăхне ӳстерессишĕн ку кăна çителĕклĕ мар. Простă вăрлăхсем кăна мар, пысăк лахалăхлă вăрлăхсем кирлĕ. Вăрлăх улăштарас ĕçе вăхăтра тата кирлĕ пек лайăх туса иртерме тăрăшас пулать. Акмали çĕрсем валљи кирлĕ чухлĕ курăк вăрлăхĕсем хатĕрлес пулать, унсăрăн пусуçавăрнăшне тĕрĕс илсе пыма май çук. Халљхи вăхăтра-ха. Сойуз Çĕрĕç комиссариачĕ те, Хатĕрлевсен халăх комиссариачĕ те ку ĕçре мухтанмалăх çитĕнӳсем туман. Çав вăхăтрах, тăрăшма çеç, кама кирлĕ çавна хускатма çеç кирлĕ, вара епĕр ку ĕçе иртнĕ çулсенче тунинчен нумай лайăхрах тăвăпăр.

Çĕре çемçетмели минерал çăнăхĕ парса тăрассине епĕр иртнĕ çулхисенчен сăмах та çук лайăхрах туса пыма пултаратпăр. Вĕсене тыткалама вĕренни, вĕсене перекетлеме тата кирлĕ пек расхутлама вĕренни çеç кирлĕ. Çĕре çемçетмели вырăнти йапаласем çинчен те нийепле те манма йурамасть.

Тракторсемпе машинăсене çуракине хатĕрлес ĕçре, кăнтăрти районсенче те-ха, мĕн тума кирлисене йăлтах туса çитермен. Çĕрĕç системинче нумайĕшĕсем-ха машинă çине тӳрĕ кăмăлпа пăхма, ăна сыхласа усрама, ăна вăхăтра тата кирлĕ пек йусама вĕренсе çитмен. Тракторсене йусас ĕçре чылай облăçсенче кайа йулнă. Йусав ĕçне чăннипе лайăх йĕркелесе йаман-ха, техникăлă работниксен кадрсем çине тивĕçлĕ тимлĕхпе пăхмаççĕ. Пирĕн тăпмансем кунта та хăйсен аллисене килсе хунă. Маçтерскойсене пысăк заводсене тунинчен те нумайрах вăхăт тăваççĕ. Краснодар крайĕнче иртнĕ çул тума ытăннă 19 МТМ-а халĕ те туса пĕтермен. МТМ-сем валљи оборудовани тупса парас тĕлĕшпе йулашки вăхăтченех сахал тăрăшнă. Çĕнĕ МТС-семпе МТМ-сене мĕнле типпа тумалине татăклăн палăртса çирĕплетмен. Ку ĕçе хăвăрт тӳрлетес пулать. МТС-сен пĕтĕм ĕçĕсем валљи тата МТМ-сенче йусав ĕçне организацилеме лайăх условисем туса çитерес пулать, ку ĕçе епĕр пысăк вăй хумасăрах тума пултаратпăр. Ку ĕçе чăнласах лайăх тытăнни кăна кирлĕ.

Колхозсенчи лашасемшĕн вырăнсенчи советсем, чăн малтан—çĕрĕç оргăнĕсем ответлă пулмала. Çакна туса çитерме вăхăт ĕнтĕ: колхоз лаши кирлĕ пек йĕркелĕхре, кирлĕ пек условире пултăр, „анемийа“ текен чир сарăлнипе хирĕç тата ытти тĕрлĕ сăтăрла киревсĕрлĕхсене хирĕç кĕрешесси сăмахпа мар, ĕçпе пултăр. Çакăн çинчен уйрăмăнах Белоруççири тата çавăн пек киревсĕрлĕхсем сахал мар пулнă ытти хăшпĕр облăçсенчи йулташсене аса илтерес пулать.

Çĕрĕç халăх комиссариачĕ умĕнче организацилĕ ĕçсем тĕлĕшпе пысăк задачăсем тăраççĕ. Çĕрĕç оргăнĕсенче ку ĕçе йулашки вăхăтсене çитиченех пăрахăçа хăварнă. Çĕрĕç системинче организацилĕх йăвашпулни тĕрĕс пусуçавăрнăшне ĕçе кĕртме тивĕçлипе тытăнна хыççăн хытă палăрчĕ. Çĕрĕç оргăнĕсем çак ĕçе пуçĕпех хатĕрленмен, çакна малашне тĕкех чăтма çук.

Çĕрĕç халăх комиссариачĕ специалисĕсен кадрсене—агрономсене тата yттисене чăн-чăн советла воспитани парас ĕçре кайа йулнă. Çав вăхăтрах пирĕн колхозсем тĕреклеччĕç, хăйсен ĕçне пĕлекен чаплă организаторсене темĕн чухлĕ кăларчĕç. Халĕ ĕнтĕ çĕрĕç оргăнĕсене хăйсен ĕçĕнчи организацилĕ задачăсене туса пыма чылайах çăмăлланчĕ. Кунта йалхуçалăх специалисĕсен ĕç условийĕсем пирки тăрăшни тата йулашки çулсенче ӳссе çитĕннĕ колхозсемпе совхоз организаторсене пысăкрах ĕçе анлăн кăларса пыни çеç кирлĕ. Ку ĕçе тумашкăн çĕрĕç работникĕсен вăл çынсене лайăх пĕлес пулать. Анчах ку тĕлĕшрен вара пиртен нумайăшĕ хытă ухсахлаççĕ. Çĕрĕç системинче руководителсене айалтан çӳле çитиченех бӳрократла мар, бољшевикла суйласа илес йĕрке пулмала, выдвиженцăсене пулăшу парасси тата вĕсен ĕçĕсене кирлĕ пек тĕрĕслесе тăрасси пулмала, вара ĕç хăвăрттăн малала кайĕ. Кирек мĕнле пулсан та, çураки кампани тĕлне пур МТС-сем валљи те директорсем пулмала, пур çĕрĕç оргăнĕсене те йертсе пыракан работниксем пулмала. Унсăрăн ытти пур ĕçсем те резуљтат пама пултараймаççĕ.

Пирĕн йалхуçалăхĕнче усă курман резервăсем нумай,—пит те нумай,—тет Молотов йулташ. Çĕрĕç системинче йалхуçалăхне йертсе пырас тĕлĕшпе пысăк практикăлă опыт пухнă çынсем сахал мар. Çĕнĕ вăйсене ăçтан илмели те пур. Тракториссемпе комбайнерсем чаплă ĕç тĕслĕхĕсене сахал мар пачĕç ĕнтĕ. Вĕсем хушшинчен, колхозсен руководителĕсем хушшинчен тата çамрăк специалиссем хушшинчен епĕр хăвăртрах колхозсем валљи нумай çĕнĕ, лайăх организаторсем, çĕрĕç оргăнĕсем валљи те нумай лайăх йертсе пыракан работниксем илме пултаратпăр. Колхозсенчи стахановецсемпе стахановкăсем çĕрĕç оргăнĕсемпе МТС работникĕсем вĕсен ĕçне организацилле лайăх ĕçлекеннисен опытчĕсене—пур колхозсене парас ĕçе тивĕçлипе,—пирĕн вăхăтра ăна бољшевикла тесçĕ,—тытăнасса кăна кĕтесçĕ.

Халь ĕнтĕ Çĕрĕç халăх комиссариачĕн руководствипе чылай çĕрĕç оргăнĕсем çĕнелчĕç, ку та ĕнтĕ йалхуçалăхĕнче малала татах пысăкрах çитĕнӳсем тума май парать. Епĕр хамăр ĕнсе çине çыпçăнса ларнă, совета хирĕçле сĕлĕхсене сахал мар тытса ывăтрăмăр, çапла тунипе вара колхозла стройăн çĕнĕ çĕнтерӳвĕсем валљи çул тасатса хутăмăр.

Малала Молотов йулташ правителствă йулашки вăхăтра туса иртернĕ пысăк ĕçсен пахалăхне паллă тунă. МТС-сене укçа-тенкĕ парса тăрассин çĕнĕ йĕрки çине тата тракторсемпе йалхуçалăх машинисене йусас ĕç валљи укçа-тенкĕ парса тăрассин, вĕсене йусас ĕçе организацилессин çĕнĕ йĕрки çине куçни МТС-сенче ĕçе лайăхлатмашкăн нумай пулăшать. Правителствăн йулашки постановленийĕсемпе, уйрăмăн илсен, МТС-сене государствă бӳджечĕ çинче тытса тăмала тунипе, МТС-сен аталанăвĕнчи пĕр тапхăра вĕçлесе çитерет.

Государствă организацийĕсем пулса тăракан МТС-сем патне епĕр сасартăках пырса çитмен. Пуриншĕн те паллă, МТС-сене нумайăн тума епĕр 1929 çул пуçламĕшĕнче тытăннă. Анчах МТС-сен государствăлă характерĕ ун чухне пирĕншĕн пĕтĕмпех паллă пулман. Есĕр пĕлетĕр, пуçламĕшĕнче МТС-сене тăвас ĕçе йертсе пымашкăн акционерлă уйрăм обществă тума палăртса хунă пулнă. Тивĕçлĕ акцисем сутса унта хресченсен средствине йавăçтарма палăртса хунă пулнă. Анчах часах, опыт МТС-сем колхоз ĕçĕнче татса паракан вырăн йышăнса тăнине кăтартса пачĕ. Ун пек организацишĕн акционерлă тип пачах йурăхсăр пулнă. МТС-сем йалта тĕп вырăнта тăракан государствă организацисем пулса тăмала пулнă, вĕсем çаплах пулса тăчĕç те, совет правителстви колхоз строителствипе çĕклес ĕçре вĕсене хăйĕн тĕп рычагĕ туса хучĕ. Çапах та, партипе правителствă машинă трактор станцисене укçа-тенкĕ парса тăрасси çинчен çĕнĕ йĕрке йышăначчен, колхозсене, государствă организацийĕсем пулса пулăшакан МТС-сем организацилес ĕç вĕçленсе çитмен пулнă. МТС-сене государствă бӳджечĕ çине куçарнипе МТС-сен аталанĕвĕнче шăпах пĕр тапхăр вĕçленсе çитет. Çак вăхăтран пуçласа МТС-сене тытса тăрас ĕçе государствă пĕтĕмĕшĕпех хăй çине илет. 1938 çулта МТС-сене кайакан расхутсем 7 мĕлйард тенкĕ йахăн пулаççĕ. МТС-сем натурăлă тӳлевĕпе укçи илмели тупăшĕсем кăтартса панă расхутсене кăçалах витме пултараймаççĕ-ха. МТС-сене тытса тăмашкăн çитеймен укçа-тенкĕрен пĕр пайне патшалăхăн хăй бӳджетĕнчен памала пулать. Ку ĕçе ĕнтĕ, МТС-сен ĕçне çĕклесе йарас вĕсем колхозсене пулăшассине вăйлатас, тесе тунă. Ку ĕнтĕ укçа-тенкĕ ĕçĕ кăна мар, вăл тата государствăлă пысăк та паха организацилĕ ĕç пулса тăрать. МТС-сем ĕнтĕ пĕтĕмĕшпех вĕçленсе çитнĕ советла организацисем пулса тăраççĕ. Вĕсене тивĕçлĕ государствăлă авторитет панă, епĕр вĕсенчен ĕçе чăнласах та пысăккăн лайăхлатма ыйтма пултаратпăр.

Иртнĕ çулхи тырпул тухăçлăхĕн резуљтачĕсем çакна кăтартса параççĕ: пирĕн халь ĕнтĕ колхозла стройăн малтанхи çимĕçĕсем пур. 1938 çулта вăл çимĕçсем тата нумайрах та тулăх, тата ытларах тайăмла пулма, тата ытларах авторитетлă пулма тивĕç.

Ун чух вара çĕрĕç оргăнĕсен авторитечĕ те чăн-чăн кирлĕ пек çĕкленĕ, çĕрĕç работникĕсен авторитечĕ çĕкленĕ,—куншăн пирĕн партипе правителствă çав тери тăрăшаççĕ.

Бољшевикла партипе пирĕн пĕтĕм халăх,—тесе пĕтерет хăй сăмахне Молотов йулташ,—çĕрĕç работникĕсенчен пĕр çакна çеç ыйтаççĕ—хамăр йалхуçалăхĕнче пытанса тăракан резервăсене хускатса йамала. Вăл резервăсене кирлĕ пек хускатса йарăр, йулташсем!

Пире парти, Сталин йулташ кăтартса паракан çулпа малала, çĕнĕ çĕнтерӳсем патне!

Молотов йулташ сăмах каланă вăхăтра темиçе хутчен те тăвăллăн алă çупаççĕ. Сăмах вĕçленнĕ вăхăтра тăвăллă оваци пулать, „Урра!“ кăшкăраççĕ. „Сывă пултăр Ленин—Сталин аслă партийĕ!“ „Сывă пултăр пирĕн çулпуçăмăр Сталин йулташ!“, „Сывă пултăр Молотов йулташ!“,—тесе кăшкăрнă сасăсем йанăраса тăраççĕ.

Йалхуçалăхĕнче малта пыракансен сљочĕ уçăлчĕ

Ĕнер, февралĕн 28-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре, Шупашкарти кинотеатрта йалхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри сљочĕ уçăлчĕ.

Сљота уçнă чухне ССРС Верховнăй Совет депутачĕ Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **Л. С. Спасов** йулташ кĕскен сăмах тухса каларĕ.

Йалхуçалăхĕнче малта пыракансен сљотне 700 делегат ытла пухăннă. Унсăр пуçне тата Тутар АСС Республикĕпе Мордва АСС Республикĕнчен делегацисем килнĕ.

Сљот ĕçне йертсе пыма 58 çынран президиум суйлаççĕ. Президиум составне пурте пĕр сасăпа çирĕплетеççĕ.

Сљотăн хисеплĕ президиумне тăвăллă оваци туса **Сталин, Молотов, Л. М. Каганович, Калинин, Ворошилов, Андрейев, Чубарь, Косиор, Микойан, Йежов, Жданов, Хрушчев, Ейхе, Петровский, Димитров, Хозе Диас, Телљман** йулташсене суйлаççĕ.

Кун йĕркипе регламент çирĕплетнĕ хыççăн сљот ĕçе тытăнать.

Кун йĕркинчи ыйту тăрăх 1937 çулхи йалхуçалăх çулĕн итогĕсем тата 1938 çулхи задачăсем çинчен Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ **С. К. Коротков** йулташ доклад турĕ.

Доклад хыççăн делегатсем „Ленин в Октябре“ филљм курчĕç.

Йанварĕн 1-мĕшĕнчи, йанварĕн 23-мĕшĕнчи тата мартăн 1-мĕшĕнчи канмали кунсем çинчен

ССР Сойуз Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кану кунĕсем ултăкунлăхăн йулашки кунĕсенче пулмали йĕркене улăштарса, çапла йышăнна: декабĕрĕн 30-мĕш вырăнне йанварĕн 1-мĕшĕнче, йанварĕн 24-мĕш вырăнне, йанварĕн 23-мĕшĕнче тата февраљ уйăхĕн вĕçĕнчи кану кунĕ вырăнне мартăн 1-мĕшĕнче канмали кунсем тăваç.

(ТАСС)

Йалхуҫалăх ĕҫĕнче малта пыракан стахановецсемпе ударниксен республикăри слҫочĕ

Слҫот делегачĕ орденоносец Куликов

Февралĕн 28-мĕшĕнче Шупашкарта йалхуҫалăх ĕҫĕнче малта пыракан стахановецсемпе ударниксен республикăри слҫочĕ уҫăлчĕ. Пирĕн умра Елĕк районĕнчи Хитекушкĕн „Ҫĕнĕ ҫул" колхозăн председателĕ орденоносец Тимофей Порфирйевич Куликов йулташ. Вăл „Ҫĕне ҫул" колхоз ĕҫĕсем ҫинчен ҫапла каласа парать:

1937 ҫулта йалхуҫалăх ĕҫĕнче агротехникăла ĕҫсене пурне те пурнăҫласа пынипе пысăк тухăҫлă тырпул туса илтĕмĕр. Ҫавăн пекех уйри тырра кĕске срукра тата пĕр пĕрчĕ сайа йамасăр пуҫтарса кĕтĕмĕр. Ҫапла вара колхозра 100 пăтран кайа тырă илекен пĕр колхозник та пулмарĕ. Нумайăшĕ 350—400-шер пăт илчĕҫ. Колхозниксем пуйан та тулăх пурнăҫпа пурăнаҫҫĕ. Ҫавăн пек телейлĕ те пуйан пурăнаҫăн тупсăмĕ колхозра кăна иккенне кура, тӳрĕ чĕрелĕ йединоличниксем 2 уйăх хушшинче 8 хуҫалăх колхозниксен ретне тăчĕҫ. Пайанхи куна пирĕн колхоз болҙшевикла ҫуракине пур йенчен те хатĕр. Акмали вăрлăхсене пĕтĕмпех икшер хут суртларăмăр. Минераллă ҫăнăхсене тата ҫĕре ҫемҫетмели вырăнти йапаласене ҫителĕклĕ таран хатĕрленĕ...

Халҙхи вăхăтра Куликов йулташ Елĕк райĕҫтăвком председателĕн заместителĕ пулса ĕҫлет. Вăл кунта та орденоносец йатне ҫухатмасть. „Ҫĕнĕ ҫул" колхоза пĕтĕм сойуз умĕнче малти вырăна каларса тăратнă пекех района та малтисен ретне кăларассишĕн тăрăшать вăл.

Пайанхи куна Елĕк районĕ вăрлăхсене суртлассипе, суртлă вăрлăх улăштарассипе плана 116 процент, ҫавăн пекех минераллă ҫăнăхсене тата ҫĕре ҫемҫетмели вырăнти йапаласене хатĕрлессипе—220,3 процент тултарнă. 1937 ҫулхи тырпулсене пур ҫĕрте те валеҫсе пĕтернĕ. Районри колхозсенче 97 агрокружок ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсем 30 000 ҫынна йахăн йавăҫтарнă. 1938 ҫулта тӳрĕ чĕрелĕ йединоличниксем 223 хуҫалăх колхоза кĕнĕ. Ҫапла вара, пайанхи куна район, тĕп, ĕҫсем тăрăх илсен, ҫуракине хатĕр тăрать. Района мала кăларасшăн пĕтĕм вăй-хала хума пулать, Куликов.

Арк. Нестеров.

Слҫота хатĕрленнĕ май

ҪĔРПӲ. Февралĕн 22-мĕшĕнче вăйлă тырпул маҫтăрĕсемпе стахановец-ударниксен районри слҫочĕ пулса иртнĕ. Слҫот иртнĕ ҫулхи итогсемпе 1938 ҫулхи йалхуҫалăх ĕҫĕн задачисем ҫинчен сӳтсе йаврĕ.

Слҫота пухăннă стахановецсемпе ударниксем хăйсен паха та числă ĕҫĕсене тĕплĕн каласа пачĕҫ.

Акă, „Елаш" колхозĕнчи опытник-стахановец Коновалов иртнĕ ҫулта пур агротехникăла ĕҫсене вăхăтра пурнăҫласа панипе кашни гектартан 24,3 центнер тулă, 32,2 центнер сĕлĕ, 19,5 центнер пăрҫа туса илнĕ.

— Епĕ, йертсе пыракан звенопа тĕрлĕрен опытсем тума тата ҫĕре агротехникă кăтартнă тăрăх ĕҫлеме тытăнсан, манăн звеноран, колхозниксем нумайĕшĕ кулатчĕҫ.

Ҫынсем кулнине епĕр хăлхана та чикмерĕмĕр. Хамăран ĕҫе ҫине тăрса ĕҫлеме тытăнтăмăр. Хамăр ĕҫе кĕркунне кăтартрăмăр. Кăҫал та ҫи лайăх участкăсем касса и се рекордлă тырпул туса илсе Пĕтĕм Сойузри Йалхуҫалăх выставкинче пулма тивĕҫ илессишĕн кĕрешетĕп,—тет Коновалов йулташ.

Коновалов йертсе пыракан звенора 75 ҫулхи М. Иванов колхозник ҫуракине хатĕрленес ĕҫре хастарлăн хутшăнса ĕҫлет.

Ҫавнашкалах „Вучах", „Ĕмĕр" колхозри стахановецсемпе ударниксем те вăйлă тырпул звенисем организацилесе рекордлă тырпул туса илессишĕн кĕрешеҫҫĕ.

В сем рекордлă участкăра пĕр гектартан 200 пăтран кайа мар тĕштырă туса илме татăклă обйазателствă илнĕ. Халĕ агротехникăна вĕренес ĕҫе анлăн сарса йанă. Ку колхозсенче ҫуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе ҫитнĕ. Ҫĕре ҫемҫетмели вырăнти йапаласене пухассине плантан ытлашшипех пухса хатĕрленĕ. Опытлă участкăсем ҫинче мĕн кирлине ҫителĕклĕ таран хатĕрленĕ.

Кунпа пĕрлех нумай колхозсенче ҫуракине хатĕрленес ĕҫре пысăк ҫитменлĕхсене палăртрĕҫ: Районра 5 колхозра пайанхи кунта ҫитсе те вăрлăхсене суртлас, йалхуҫалăх машинĕсене йусас ĕҫе тытăнман. Нумай колхозсенче агротехникăна вĕренмели кружоксем организацилемен, организациленĕ пулсан та, заҫатисем йĕркелĕ пулса пырайманҫҫĕ.

Иртнĕ ҫулти йалхуҫалăх ĕҫĕнче паха тĕслĕхсем кăтартнă стахановецсемпе ударниксем сахал мар. Анчах райҫĕрĕҫ пайĕнче ĕҫлекенсем вĕсен опычĕсене ытти колхозсене ҫитерессипе нимĕн те туман. Вĕсем стахановецсемпе ударниксене вĕрентсе пулăшса пымаҫҫĕ.

Слҫота пухăннă стахановецсемпе ударниксем ҫуракине хатĕрленес ĕҫре колхоз правленисемпе райҫĕрĕҫ пайĕнчи работниксен стахановецсемпе ударниксене куллен пулăшса пырассине кăтартса хăварчĕ.

Кăҫал районĕпе гектартан 120 пăтран кайа мар, рекордлă участкăсем ҫинчен 200 пăтран кайа мар тĕштырă туса илессипе Ҫĕрпӳ районĕнчи колхозниксем Трак районĕнчи колхозниксене социалисăмла ăмăртăва чĕнчĕҫ. С. Павлов.

Ĕҫри опыт пысăк

Нумайах та пулмасть хамăр колхозниксен пухувĕнче иртнĕ ҫулта тунă ĕҫсен итогне сӳтсе йаврăмăр. Колхозниксем ҫакна палăртрĕҫ: пирĕн вăйлă тырпулшăн тата йышлă вылҙăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешес ĕҫсен опычĕ пĕчĕк мар ĕнтĕ. Иртнĕ ҫулта вăтам шутпа гектартан 18 центнер тĕштырă туса илтĕмĕр. Уйрăм участкăсем ҫинчен сĕлĕ 45 центнер, ыраш 35 центнер илнĕ. Тырпул тухăҫне ӳстерсе пырассишĕн агротехникăла ĕҫсене тĕрĕс пурнăҫласа пыратпăр. Ҫĕре лайăх ĕҫлесе, удобренисемпе пĕлсе усă куратпăр.

Халĕ ĕнтĕ мĕнле ĕҫлесен тухăҫлă тырпул туса илме май пуррине колхозниксем лайăх ăнланса илчĕҫ. Иртнĕ кĕркунне кăҫал акмали вырăна пĕтĕмпех 22—25 сантиметр тарăнĕш сухаласа хăвартăмăр. Ĕҫĕн ăнаҫлăхĕ малтан лайăх хатĕрленсе пынинчен килет. Ҫакна шута илсе ҫуракине хатĕрленес ĕҫсене кăтартулăн туса пыратпăр. Ҫак вăхăта ҫитсе Вăрнартан 3 тоннă фосфорит ҫăнăхĕ кӳрсе килнĕ. Уйа 850 лав тислĕк кăларнă тата кăҫал акмали вырăна, 2 гектар ҫине, кĕркуннех тислĕк тăкса сухаласа хăварнă. Фекалирен, чăхчĕп тислĕкĕнчен тата ытти йапаласенчен 100 лавлă компост тăватпăр. Вăрлăхсене кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе, суртласа хутăмăр.

Ҫуракине хатĕрленес пĕтĕм ĕҫ агроплан тăрăх пулса пырать. Иртнĕ ҫулта епĕр ыраш калчине сăнаса пăхмалăх анчах сӳреленĕччĕ. Ҫӳреленĕ вырăнта ыраш уйрăмах лайăх пулчĕ. Колхозниксем ыраш калчине ҫуркунне сӳрелени усси пысăккине лайăх ăнланса илчĕҫ. Кăҫал ыраш калчине пĕтĕмпех сӳрелеме йышăнтăмăр.

Колхозра организациленĕ агрокружокра 12 ҫын вĕренеҫҫĕ. Кунсăр пуҫне районри колхоз шкулĕнче 1 ҫын вылҙăх-чĕрлĕх ĕҫĕпе, пĕр ҫын чуптару пункчĕн заведуйушчийĕ пулма, 2 тракторис тата пĕр ҫын йĕтĕн-кантăр ĕҫĕпе вĕренеҫҫĕ. Ҫапла ĕнтĕ епĕр ҫуракине хатĕрленес ĕҫе кадăрсене вĕрентсе хатĕрлессипе пĕрлех туса пыратпăр.

Колхозра сурăх ферми пур. Кунта та пирĕн ĕҫе йуратакан, тăрăшса ĕҫлекен кадăрсем ӳсеҫҫĕ. Фермă заведуйушчийĕ Корнилов йулташ нумай ҫул хушши ĕнтĕ фермăна вăйлатса пырассишĕн вăй хурса ĕҫлет. 1937 ҫулта пирĕн план тăрăх сурăхсем 180 пуҫ пулмала пулсан, епĕр 290 пуҫа ҫитертĕмĕр. Пайана илсен пирĕн фермăра сурăхсем 300 пуҫран та иргеҫҫĕ. Вăл шутран ҫĕр пуҫа йахăн кăҫалхи путексем. Сурăхсен ăратне лайăхлатсах пыратпăр. Ҫак фермăран иртнĕ ҫулта 12 пин тенкĕ тупăш илтĕмĕр. Кунсăр пуҫне 4 пин тенкĕлĕх сутмали сурăхсем пур.

Хамăр тунă ĕҫсене пысăк ĕҫ тесе шутлатпăр. Вăл ҫитĕнӳсем пире малали ҫĕнтерӳсемшĕн ĕҫлеме хавхалантараҫҫĕ. Анчах районра тата республикăра пирĕнтен те вăйлă ĕҫлекен колхозсем нумай. Вăйлă тырпул маҫтăрĕсен республикăри слҫочĕнчен епĕр вĕсен опытне илсе кайатпăр.

Елĕк районĕнчи „1-мĕш Май" колхоз председателĕ Афанасйев.

Ӳкерчĕк ҫинче: Батайски МТС тракторисĕ И. И. Пуценко йулташ (Ростов облăҫĕ) „СТЗ" трактор моторĕн газо-распределителĕлне ларать. Тракторсене йусас ĕҫре вăл нормăна 150 процент тултарать. А. Штийников фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото)

ССР Сойузĕн Прокуратуринче

Халҙхи вăхăтра ССР Сойузĕн Шалти ĕҫсен Халăх Комиссариачĕн органĕсем „сылтăмла-троцкисла блок" йатлă заговорла ушкăн ĕҫĕ тăрăх следстви туса пĕтернĕ. Следстви ҫаксене тупса палăртнă: ҫак ушкăн ССР Сойузĕшĕн тăшманла йутҫĕршыв государствăсен разведкисен заданийĕ тăрăх организациленнĕ, вăл ушкăн хăйĕн умне йутҫĕршыв государствисене усă кӳрес тесе шпионаж, сăтăр, диверси, террор, ССР Сойузĕн ҫар хăватне хавшатас, ҫак государствăсене ССР Сойузĕ ҫине варҫăпа тапăнма провокаци тăвас, вăрҫăра ССР Сойузне ҫĕнтерес, ССР Сойузне татăкăн-татăкăн пайласа унран Украинăна, Белоруҫҫине, Вăтам—Азири республикăсене, Грузине, Арменине, Азербайджана, Инҫет-Хĕвелтухăҫĕнче Приморйене татса илсе ҫав асăннă йутҫĕршыв государствисене парас, йулашкинчен, ССР Сойузĕнчи халҙхи социалисăмлă обшчествăлă тата государствăлă стройа сирпĕтсе антарас, капиталисăма кайала тавăрас, буржуази влаҫне кайала тавăрас тĕллев лартнă.

Следстви ҫакна тупса палăртнă: „сылтăмла-троцкисла блок" хăйĕн речĕсенче троцкиссен, сылтăммисен, зиновйевцăсен, меншевиксен, есерсен, Украинăри, Белоруҫҫири Грузири, Вăтам—Азири республикăсенчи, Армениири, Азербайджанри буржуалă националиссен совета хирĕҫле вăрттăн ĕҫлекен ушкăнĕсене пĕрлештерсе тăнă.

Следстви материалĕсем ҫаксене кăтартаҫҫĕ: „сылтăмла-троцкисла блокра" тăракансем совет правителсвине хирĕҫ тата буржуази влаҫне тепĕр хут таварса килессишĕн кĕрешес ĕҫре хăйсен пĕтĕм шанчăкĕсене йутҫĕршыв агрессорĕсем хĕҫпăшаллă вăйпа пулăшасси ҫине хунă, агрессорсем ҫав пулăшува заговоршчиксене — ССР Сойузне татăкăн-татăкăн ваклана Украинăна, Белоруҫҫине, Вăтам—Азири республикăсене, Грузине, Арменине, Азербайджана, Приморйене ССР Сойузĕнчен татса илнĕ условисем тăрăх пама пулнă.

Следстви ҫакна татса палăртнă: ҫак заговор руководителĕсемпе унта тăнисенчен нумайĕшĕсем тахҫантанпах йутҫĕршыв разведкисен агенчĕсем пулнă, нумай ҫул хушши ҫав разведкăсене майлă шпионла ĕҫ туса пурăннă. Ку чи малтан заговора чĕрĕ вăй парса хавхалантараканĕсенчен пĕрне—халăх тăшманне Л. Троцкине тивет, вăл,—ăна халĕ лайăх палăртнă,—пĕр йутҫĕршыв разведкипе, шпион пулса, 1921 ҫултанпах ҫыхăннă тата тепĕр йутҫĕршыв разведкипе 1936 ҫултанпа ҫыхăннă. Ҫак ĕҫпе айăпланакансенчен хăшпĕрисем патша охраникин провокаторĕсемпе агенчĕсем пулнă.

Ҫакна палăртнă: „сылтăмла-троцкисла блок" пуҫлăхĕсенчен нумайăшĕсем хăйсен шпионла, сăтăрла, диверсилĕ, террорла ĕҫĕсене Троцкий, Бухарин, Рыков тӳрех панă задани тăрăх тата уйрăм йутҫĕршыв государствисен генералҙнай штабĕсенче пысăккăн шухăшласа хатĕрленĕ плансем тăрăх пурнăҫа кĕртсе пынă.

„Сылтăмла-троцкисла блокăн" террорла ĕҫĕсем йенĕпе айăпланакансем В. В. Куйбышева, В. Р. Менжинскине, А. М. Горькине тискеррĕн вĕлерессине организацилесе пурнăҫа кĕртнĕ. Вĕсене заговора хутшăннă врачсем—Л. Г. Левин, И. Н. Казаков, А. И. Виноградов тата профессор Д. Д. Плетнев пулăшнипе вĕлернĕ.

Ҫавăн пекех тата троцкисла-зиновйевла центр С. М. Кирова тискеррĕн вĕлерессине „сылтăмла троцкисла блок" йышăнна решени тăрăх тунине тупса палăртнă.

Следстви ҫак тĕлĕнмеле преступленисем троцкиссемшĕн те сылтăммисемшĕн те ăнсăртра пулманнине палăртнă.

1918 ҫултах, Октăбĕр револҙуци хыҫҫăн, Брестра килĕшӳ тунă тапхăрта, Бухаринпа унăн „сулахайри" коммуниссен текен ушкăнĕ тата Троцкий хăйĕн ушкăнĕпе „сулахайри" есерсемпе пĕрле В. И. Ленина, Совет Правителствин пуҫлăхне, хирĕҫ заговор организациленĕ.

Бухарин, Троцкий тата ытти заговоршчиксем,—ун ҫинчен следстви материалĕсем кăтартса параҫҫĕ,—Брестри килĕшӳве аркатса йарас, совет правителствине сирпĕтсе антарас, В. И. Ленина, И. В. Сталина тата Й. М. Свердлова арĕслесе вĕлерес те вăл вăхăтра хăйсене „сулахай" коммунис ем тенипе витĕннĕ бухаринцăсенчен троцкиссенчен тата „сулахай" есерсенчен ҫĕнĕ правителствă тăвас тĕллев лартнă.

Ленина тата Совет влаҫне хирĕҫ 1918 ҫулта тунă ҫак преступленисене кура, троцкиссемпе бухаринцăсен совет халăхне хирĕҫ йулашки тапхăрсенче тунă ирсĕр ĕҫĕсем уҫăмлăн тата ăнланмалла курăнса тăраҫҫĕ.

Ĕҫ тăрăх судпа айăпланаҫҫĕ Н. И. Бухарин, А. И. Рыков, Г. Г. Йагода, Н. Н. Крестинский, Х. Г. Раковский, А. П. Розенголҙц, В. И. Иванов, М. А. Чернов, Г. Ф. Гринҙко, С. А. Зеленский, С. А. Бессонов, А. Икрамов, Ходжайев Файзулла, В. Ф. Шарангович, П. Т. Зубарев, П. П. Буланов, Л. Г. Левин, Д. Д. Плетнев, И. Н. Казаков, В. А. Максимов тата П. П. Крючков.

Айăпласа ҫырнине ССР Сойузĕн Прокурорĕ ҫирĕплетсе ĕҫпе пĕрле ССР Сойузĕн Аслă Суд Ҫар Коллегине судăн уҫă ларувĕнче пăхса тухма панă.

Ку ĕҫе пăхса тухма ССР Сойузĕн Аслă Суд Коллегийĕ мартăн 2-мĕшĕнчен тытăнать.

(ТАСС).

Февралҙти буржуалă-демократилĕ револҙуци*)

IV.

Вăхăтлăх правителствă буржуази пĕрвлаҫлăхĕшĕн кĕрешнинче

Петроград совечĕ пулăшма пулнă хыҫҫăн, Вăхăтлăх правителствăчи малтан романовсен династийĕ пирки тăракан ыйтăва тытăннă. Правителствă совета пĕлтермесĕр мартăн 2-мĕшĕнче А. И. Гучковпа В. В. Шулҙгина патша патне Пскова кăларса йанă. Вĕсем тухса кайсан, кантăрла иртсен пĕр 3 сехетре, Таврический дворец залне пухăннă митингра Милҙуков правителствă туса хуни ҫинчен пĕлтерсе сăмах калана. Милҙуков сăмахне хапăл туса йышăнна, анчах алă ҫупнă хушăрах протеслени те илтĕннĕ. „Кам сире суйланă?" тесе пӳлнĕ оратора. Милҙуков кнҙаҫ Лҙвова „организацилĕ обшчественнăҫ представителĕ" тесе каласан, халăх хушшинчен темиҫе сасă илтĕнсе кайнă: „Цензовăй!"—урăхла каласан, буржуалă обшчественнăҫ представителĕ. Милҙуковăн Гучкова нумайччен мухтама тата, ытлашши ан хирĕҫчĕр тесе, куҫкĕретĕн суйма та тивнĕ. „Халĕ, епĕ сирĕнпе залра калаҫнă чух, столицă урамĕсенче Гучков пирĕн ҫĕнтерĕве организацилет", тесе агитациленĕ Милҙуков. Гучков ҫав вăхăтра пуйăспа патша патне вĕҫтернĕ. Пысăк залра пур йенчен те „династи?" тесе кăшкăрнă. Милҙуков, йулашкинчен, сывлăш ҫаврăнă хыҫҫăн, сыхланса картсене уҫма хăтланнă:

„Манăн ответ пурне те ăшкантарас ҫукине епĕ малтанах пĕлетĕп, анчах ҫапах калас тетĕп. Кивĕ деспот, Российăна пĕтсе ларасси патне ҫитерсе тăратнăскер, престола хăй ирĕккĕн пăрахĕ йе ăна сирпĕтсе антарĕҫ. Влаҫ регент аллине, аслă кнҙаҫа Михаил Александровича куҫĕ. Алексей наследник пулĕ" [1].

Йĕркесĕр шав тапраннă. Вырăнсенчен „ку вăл кивĕ династи" тесе кăшкăрнă. Шавлама чарăнсан, Милҙуков хăй пĕлтервинчен йулнă кăмăла кăштах ҫемҫетме тăрăшнă:

Ҫапла, господа, вăл кивĕ династи. Есĕр, тен, йуратмастăр ăна, тен, епĕ те йуратмастăп. Анчах ĕҫ халĕ ăна кам йуратнинче мар. Государствă стройĕн форми ҫинчен тăракан ыйтăва епĕр ответ памасăр тата татмасăр хăварма пултараймастпăр. Епĕр ăна монархийĕн парламентла конституцийĕ пулмала тесе шутлатпăр. Ыттисем тен урăхла шутлаҫҫĕ. Анчах епĕр халĕ тӳрех татса хурас вырăнне тавлашса ларсан, Российă граждăн вăрҫине кĕрсе ӳкĕ те, тин ҫеҫ ишĕлтерсе антарнă режим чĕрĕлсе тăрĕ... Хăрушлăх иртсе кайса ҫирĕп йĕрке пуҫлансанах, епĕр пурне те тивĕҫ, тӳрех, пĕртан тата вăрттăн сасăласа... Учредителлĕ собрани пухма хатĕрленĕпĕр. Ирĕклĕн суйланă халăх представителстви Российăри пĕтĕмĕшшин шухăшне кам—епĕр-йе пирĕн тăшмансем тĕрĕсрех палăртнине татса парĕ" [2].

Милҙуков сăмахĕ заводсемпе полксенче хытă пăлхантарса йанă. Каҫхине Таврический дворецă пĕр ушкăн офицер пынă. Милҙуков хăйĕн сăмахĕсене кайала илмесĕр епĕр полксене тавăрăнма пултараймастпăр, тенĕ вĕсем. Пăшарханса ӳкнĕ правителствă членĕсем пухăннă. „Халăха лăплантарас" майпа Милҙуков сăмахĕсем „пĕр вăл шутланă шухăшсем кăна пулса тăраҫҫĕ" тесе калама постановлени йышăннă.

Халăха ирĕксĕрлесе ҫĕнĕ патша йышăнтарассине хирĕҫ Петроград вăйлăн протесленĕ вăхăтра, Гучковпа Шулҙгин Пскова ҫитсе правителствă престола Алексейе пама шутлăни ҫинчен каласа панă. Николай II ҫапла каланă: хамшăн та ывăлшăн та престола пăрахса Михаил пиччене пама шут тытрăм, тенĕ. Патша пулнă Николай ҫав хушăрах ашшĕн кăмăлĕ ҫине йанă: „Епĕ хамăн ывăлран уйăрăлма пултараймастăп." [1] Чăннипе Николайа политикăла ăстăн йертсе пынă: вăл ывăл пуҫне чикичен мелле вăхăта кĕтсе илес тенĕ. Гучковпа Шулҙгин тӳрĕ провод тăрăх Вăхăтлăх правителствăна отречени текстне пĕлтерсе Петрограда тухса килнĕ. Столицăри кăмăл-шухăша хисепе илсе, правителствă текста пичетлесе кăларас мар тесе йышăннă. Шулҙгина телефон тăрăх асăрхатарма елкĕрнĕ, анчах Гучков пуйăс ҫинчен тӳрех чукунҫул ҫинче ĕҫлекенсен вокзала пухăннă митингне кайнă. Унта вăл манифеса вуласа панă та „сывă пултăр император Михаил!" [2] тесе пĕтернĕ. Ăна хирĕҫ „тĕп пултăр патша!" тенĕ сасăсем йанăраса кайнă. Тарăхса ҫитнĕ рабочисем Гучкова ҫавăнтах арĕслесе ухтарма ыйтнă. Николай II вырăнне Михаил II-мĕшне лартасси ҫинчен пĕлсен, „хрен йуҫ кăшманран пылак мар" тесе тарăхнă салтаксем.

Вăхăтлăх правителствă йышлă массăсен шухăш-кăмăлĕ ҫине пырса ҫапăнса, монархине упраса хăварасси ҫинчен сăмах та пулма пултарманнине ăнланса илнĕ. Родзйанко, Милҙуков, Гучков, Некрасов Керенский тата правителствăн ытти членĕсем мартăн 3-мĕшĕнче ирпе иррех аслă кнҙаҫ Михаил патĕнче пулнă. Делегацийĕн ытларахăшĕ ăна, хăй черечĕпе, престола пăрахма килĕштернĕ. Милҙуковпа Гучков ҫеҫ хирĕҫ тăнă. Вĕсем аслă кнҙаҫа монархине хӳтлемешкĕн Петроград тулашĕнче вирлĕ вăй пухма сăмах панă. Тытăнса йулас ҫуккине Михаил хăй те ăнланса илнĕ. Унччен малтанхи кун вăл Гатчинăран Петрограда кайма пуйăс ыйтнă. Советра ăна, „гражданин Романов" вокзала килме, билет илсе пурте ҫӳрекен пуйăспа кайма пултарать, тесе каланă. Михаил Романов кăштах шухăшласа тăнă, унтан Родзйанкопа пĕччен калаҫнă та престола йышăнманни ҫинчен пĕлтернĕ. Милҙуков ҫапла каласа парать: ҫав хушăра Керенский „Ваше высочество, есĕр—ыр кăмăллă ҫын" [1] тенĕ сăмахсемпе аслă кнҙаҫа ал пачĕ.

Монархине ҫăлма май килмен, анчах буржуази ун вырăнне ҫĕнĕ влаҫ мĕнле пулсан та саккунлăрах курăнтăр тесе тăрăшнă. Гучковпа Шулҙгин тăрăшнипе патша кнҙаҫ Лҙвова министрсен Совечĕн председателне лартнă. Ҫĕнĕ правителствă пуҫлăхне малтанхи император саккунлă ҫирĕплетнĕ пек пулса тухнă. Родзйанко пĕр хут кăна мар ҫапла каланă: кнҙаҫ Лҙвов „халлĕхе сирпĕтсе антарман аслă влаҫри ҫын пиллесе панă влаҫа тытса тăнă". [2]

Чăннипе Лҙвова вырăна лартасси ҫинчен ҫырнă приказа ал пуснă чух Николай патша пулман. Михаил хăйĕн отреченийĕнче халăха:

„Государствă думи пуҫарнă тата пĕтĕм влаҫа шанса панă Вăхăтлăх правителствăна" [1] пăхăнса тăма чĕннĕ.

Петроград ҫар округĕн ҫĕнĕ главнокомандуйушчине те кивĕ влаҫпа килĕшсе ĕҫе лартнă. Генерал Хабалов вырăнне генерал Л. Г. Корнилова уйăрса лартнă. Корнилов патша ҫывăхĕнчи ҫынсем хушшинче ырă йатра тăнă. Германи тыткăнĕнчен тухса кайсан, вăл Николай II „кăмăлне те тивĕҫ" пулнă. Мартăн 5-мĕшĕнче Лҙвов телеграмми тăрăх губернаторсене тата вице-губернаторсене пурне те ĕҫрен кăларнă, вĕсен ĕҫне туса пыма губерни земски управă председателĕсене хушнă. Анчах председателсене нумайĕшне хăй вăхăтĕнче кивĕ влаҫ уйăрса лартнă, суйланă пулсан та, вĕсене чи реакцилĕ ушкăнсенчен суйланă.

Монархине ҫăлма хăтланнине хирĕҫ рабочисемпе салтаксем хытă протеслени правителствă руководителĕсене буржуази пĕрвлаҫлăхне вăйпа ҫирĕплетме май ҫукки ҫине кăтартса панă. Куҫкĕретĕн пусмăрлани массăсене тарăхтарнă, отпор партарнă, револҙуцийе таранлатнă. Сывлăш ҫаварса йама, вăй пухма, унтан вара револҙуцийе пĕтерсе лартма уступкăсем тăвас, пăркаланас, шеллемесĕр сăмах парас тактикă кăна тăрса йулнă. Керенскине правителствăна кĕртни ҫавăн пек уступкă пулнă та. Мартăн 2-мĕш умĕн ҫĕрле совет представителĕсемпе калаҫнă чух Керенский ҫинчен нимĕн те асанман. В. В. Шулҙгин хăйĕн аса илĕвĕсенче кадет Шингарйов, вăхăтлăх правителствăн ҫĕрĕҫ министрĕ, револҙуци умĕн мĕн йумахлани ҫинчен каласа парать:

— „Пирĕн ҫине влаҫ йăтăнса ансан, прогрессивлă блока сулахайалла сарнипе пулăшу шырама лекет...

— Сирĕн шутпа вăл мĕнле пулмала?

—Епĕ Керенскине чĕннĕ пулăттăм.

— Керенскине? Мĕнле ĕҫе лартма?

— Йустици министрне, тейĕпĕр.. Халĕ ку вырăн нимĕн те мар, анчах револҙуцирен унăн пуҫлăхĕсене хăйпăтса илмеле.. Вĕсенчен Керенский—ҫапах та пĕртен-пĕри. Вăл хамăрпа пĕрле пулни хамăра хирĕҫ тăнинчен нумай усăллăрах" [1].

Вăхăтлăх правителствă хăйне ал-урараn ҫыхса лартас мар тесе тăрăшнă. Мартăн 6-мĕшĕнче вăл халăх патне воззвани ҫырса кăларнă. Воззванире нимĕн тĕлли-паллисĕр ҫапла каланă:

„Халăх ĕмĕтне пурнăҫа кĕртсе ҫĕршыва граждăнсен ирĕклĕ пурнăҫ тăвас ҫутă ҫулĕ ҫине илсе тухас ĕҫе хăйĕн чи таса та ответлă тивĕҫĕ тесе шутлать" [2].

„Халăх ĕмĕчĕ" тата правителствăн „чи таса тивĕҫĕ" татăклă мĕнле пулнине сăмахпа тултарнă кăна. Пăр воззванирен никам та ăнланса илме пултарайман собрани пухма пулнă. Вăл тĕп ыйтăвĕсене пурне те татса парĕ, тенĕ. Анчах пухма срука кăтартса паман. Милҙуков митингра монархине хирĕҫ протеслесе халран йарсан, вăл Учредителлĕ собрани хыҫне пытаннă. Ҫĕр, ҫăкăр тата мир ыйтăвне хирĕҫ ответ пама ыйтнă ҫынсен пӳрне те правителствă Учредителлĕ собрани пухăнассине кĕтме хушнă.

Мартăн 6-мĕшĕнче кăларнă воззвани те, Вăхăтлăх правителствă мартăн 2-мĕшĕнчи декларацийĕ пекех, хресченсене ҫĕр илсе парасси ҫинчен сăмах та хускатман. А. И. Шингарйова, земский врача, кадета, IV государствă думи членне, Ҫĕрĕҫ министрĕ туса лартнă. Шингарйова ҫав вырăна лартнă вăл Думăра пĕрмайах продоволҙстви ыйтăвĕ тăрăх тухса каланинчен ҫеҫ килнĕ. Ҫĕрĕҫ министерстви Вăхăтлăх правителствăшăн чи малтан продоволҙстви министерстви

---

*) Малалли. Пуҫламăшĕ 36 (4849); 37 (4850); 38 (4851) тата 42 (4856)-мĕш номĕрĕсенче.

[1] В. Екатерининском зале. „Известия Петроградского совета рабочих депутатов" № 4, 3 марта 1917 г.

[2] Савйитах.

[1] Лукомский А. Из воспоминаний. „Архив русской революции", том II, Берлин, 1921 г, стр. 25.

[2] Родзянко М. В. Государственная дума и февральская 1917 года революция. Ростов на Дону, 1919 г. стр 45—46.

[1] Милюков П. Н. История второй русской революции. Том 1, выпуск 1, София, 1921 г. стр.

[2] Родзянко М. В. Государственная дума и февральская 1917 года революция, Ростов на Дону, 1919 г. стр 48.

[1] Отречение великого князя Михаила Александровича. „Известия Петроградского Совета" № 5, 4 марта 1917 г.

[1] Шульгин В. Дни. „Русская мысль", Прага, 1922 г., кĕн. VI—VII, стр. 117.

[2] От Временного правителства. „Вестник Временного правительства" №2, 7 марта 1917 г.

КОМСООМЛТИ КАРЙЕРИССЕМ ÇИНЧЕН

Григори Иванович Иванов хăйне-хăй, нумай пĕлекен пысăк çын вырăнне хураканскер. Критикăна йуратмасть. Уншăн пулсан, çынсем çеç йăнăшма пултараççĕ, вăл нихăçан та йăнăшас çук.

Чăннипе пăхсан, унăн йăнăшсем нумай. Вăл Шăхасанти вăтам шкул çумĕнчи комсомол комитечĕн секретарĕ пулнă вăхăтра троцкис Павловпа çыхăну тытнă. Шкулта вĕренекенсене урокра „ирçе," „ухмах" т. ыт. сăмахсемпе те вăрçнă, IX класри стена хаçатне çунтарса йама хушнă. Май уйăхĕнче ӳсĕрпе столовăйне пырса буфета çĕмĕрнĕ. Çаксем уншăн нимĕн те мар.

Иванов часах хăйне страхлама хăйен „революцилĕ сыхлăхне" кăтартма, çынсен „тăшманлăхне" палăртма йуратать.

— Пирĕн шкул директорĕ пулнă Волков шкулта тăшманла группă организациленĕ; Йегоров учител кулак ывăлĕ, уншăн ăна комсомолтан кăларнă. Григорйева учител комсомолка кулак хĕрĕ, Чăваш пединститутĕнче Капитановпа („халăх тăшманĕ" пулнăскер) çыхăну тытнă, вăл пулăшнипе комсомол комитечĕн членне кĕрсе кайнă. Ун çинчен мана Капитонов хăй çырса пĕлтерчĕ, т. ыт. те.

Иванов елекленипех Григорйевана комсомолтан кăларса пăрахнă.

Тĕрĕссипе шкулта Волков ниййепле группă та туман. Унăн чăн та хуçасăрлăх пысăк пулнă. Тĕрĕсленĕ хыççăн, Йегоров учител кулак ывăлĕ марри курăнчĕ. Комсомолтан вăл учота вăхăтра тăмасăр хăйне хăй тухса ӳкнĕ. Григорйева пирки Капитонов Иванов патне нимĕн те çырман. Григорйева ашшĕнчен 6 çулта йулнăскер, пионер, комсомол организацисенче çитĕнсе ӳснĕ.

Ивановшăн тĕрĕс мар жалобă çырасси те нимĕн те мар. Çак статйа авторĕ, Иванов йăнăшĕсене тӳрлетме, çынсене вăл тĕрĕс мар айăплавине катарта пуçласан, Иванов часах унăн „айăпне" те тупать. Вăл Капитоновпа çыхăну тытнă, Григорйевана хӳтĕлет, тесе çырса Обкомола жалабă йарать.

Карйерист Иванов жалобине тĕрĕслеме Обкомолтан Баранов (комсомол Обкомĕн йертсе пыракан комсомол оргăнсен пайĕн пуçлăхĕ) Шăхасана çĕмĕрсе çитет те жалăбăна тĕрĕслемесĕрех, Соколова политикă йенчен шанчăксăр çын туса хурать.

Райкомол бӳровĕн ларăвĕнче те, комсомол активĕн районри пухувĕнче те, райкомол пленумĕнче те вăл:

— Жалăбă тĕрĕс. Соколов Афанаçйева та хӳтĕленĕ, райкомол аппаратĕнче йурăхсăр çынсене (Федотовпа Павлова) тытнă, комсомолтан кăларнă,—тесе кăшкăрать.

Райкомол пленумĕнче Соколова ĕçрен кăларма сĕнет. Пленум решени йышăнма иккĕленет. Баранов 2—3 хут тухса каласан, унăн сĕнĕвне йышăнаççĕ.

Райкомол бӳровĕнче Соколов „хӳтĕлекен" Афанаçйевпа Григорйевана комсомолтан, „йурăхсăр" Федотовпа Павлова ĕçрен кăларать те—Барановăн ĕçĕ пĕтет, вăл тулли кăмăлпа Шупашкара вĕçтерет.

Тĕрĕссипе пăхсассăн, мĕнре пулнă-ха Соколов Афанаçйевпа Григорйевана хӳтĕлени?

Комсомол пухувĕнче, райкомол бӳровĕнче Григорйевана комсомолтан кăларма çителĕклĕ сăлтавсем çук,—тенĕ Соколов. Афанаçйева пуçламĕш организаци комсомолтан кăларнă пулсан, райкомол бӳровĕ комсомолтах хăварнă. Бӳро ларăвĕнче Соколов председател пулнă.

Мĕнре-ха Федотовпа Павлов йурăхсăрри?

Федотов (пропагандис) 1931 çулта авланать. 1933 çулта унăн хунĕ çине çирĕп задани хураççĕ. Тата вăл (хунĕ) колхоза кĕрсе тухать. Федотов арăмĕ çула колхоза ĕçлеме каймала чухне килте никам çук пирки ачисене ашшĕсем патне хăварнă. Çапла вара Федотова, пуйан хунĕпе çыхăну тытать, тесе йурăхсăр çын тăваççĕ.

Павлов (райкомолăн технически секретарĕ) çине тепĕр карйерист Павлов, „вăл çынна хĕненĕ" тесе жалăбă панă пулнă. Тĕрĕсленĕ хыççăн, жалăбă тĕрĕс марри палăрнă. Çапах та Павлов çине жалăбă пур тесе, ăна йурăхсăр çын тăваççĕ.

Çак „Шăхасан ĕçне" Обкомол бӳровĕ те пăхса тухмарĕ, вăл хăйне хăйех çирĕпленчĕ пулас.

Çӳлте асăннă Иванова пуçламĕш организаци те, райкомол та комсомолран кăларнă. Вăл обкомола апелляци панă. Иртнĕ çулта декабĕрĕн 25-мĕшĕнче обкомолăн апелляци комиççийĕ: „Иванов ĕçне пăхса тухса, вăл ĕçе вырăна тухса тĕрĕслемеле", тесе йышăнать. Ун хыççăн ку ĕçпе вырăна никам та тухмасть. 1938 çулти йанварĕн 7-мĕшĕнче Обкомол бюровĕ çапах та хăйĕн решенинче: „Баранов вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн, райкомол Иванова тĕрĕс мар айăплани курăнчĕ. Иванова тăшмансемпе çителĕклĕ кĕрешменшĕн йатласа хăварас", тесе çырать.

Обкомол Иванов ĕçне икĕ хут пăхса тухнă чухне те райкомол представителне чĕнмен. Вĕсем апелляцисене пăхна çĕре райкомол представителĕсене йаланах чĕнмеççĕ. Çавăнпа ĕçе пĕр йенлĕ пăхаççĕ.

Комсомол чăваш организацийĕ хăйĕн ретне тăшмансенчен тасатас тĕлĕшпе сахал мар ĕç турĕ. Çав вăхăтрах комсомолран кăларас, комсомолран кăларнисен апелляцисене пăхса тухас ĕçре йăнăшсем темĕн чухлех. Çак çӳлте кăтартнă фактсем те комсомолецсен ĕçĕсем çине бӳрократла—формалла, çиелтен çеç пăхнине кăтартаççĕ. Çав Иванов пек карйериссен жалобисем тăрăх, Баранов пек „руководителсем" сахал мар çынна тивĕççĕрех комсомолтан та, ĕçрен те кăларнă.

Çавăнпа Чăваш Обкомолĕн ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанвар уйăхĕнче пулса иртнĕ пленумĕн решенинчен хăй валли тивĕçлĕ вывод тумала. Йăнăшсене часрах тӳрлетмеле.

С. Соколов

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителстви

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: шурă пăнчăсемпе паллă тунă йĕр—чукунçул мĕн чухлĕ хывнине, хура йĕр—чукунçул хывмалине кăтартать. Февралĕн 28-мĕшне пурĕ 50 километртa 150 метр лини хывса Çĕрпӳ станцине çитнĕ.



Вăрман хатĕрлевĕнчи стахановла уйăхлăх

Вăрманта та чукунçул строителствинчи пекех ĕçлетпĕр

Трак районĕнчи колхозниксемпе йединоличниксем Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче çав тери паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç. Çав опытпах вĕсем вăрман хатĕрлевĕнчи стахановла уйăхлăха хутшăнчĕç. Уйăхлăх пуçланнă кун (февралĕн 10-мĕшĕнче) вăрманта касакансемпе турттаракансем—94 çын, 11-мĕшĕнче—103 çын, 14—15-мĕшĕсенче—144 çын ĕçленĕ. Вăрманта ĕçлекенсен шучĕ ӳссех пырать.

Çавăнпа пĕрлех стахановла йухăм та кунран кунах вăйланса пырать. Уйрăм колхозниксем нихçан туман çитĕнӳсем тăваççĕ. Акă „Красное знамя" колхозри 3 çынтан тăракан бригадă (М. Йефимов, С. Илйин, Н. Максимов йулташсем) февралĕн 12-мĕшĕнче 20 фестметр турттарса кăларса çĕнĕ çĕнтерӳ турĕ. Çавăн хыççăн вĕсем хăйсем кашни куллен лаша пуçне 7 фестметр турттарма сăмах пачĕç. „Красноармеец" колхоз членĕсем: П. Фролов, М. Плотников, П. Йефимов, П. Волков, И. Йаковлев кашнийех куллен 3,5—4 кубла метр вутă татса купалаççĕ.

Колхозпа колхоз, бригадăпа бригадă хушшинче социалисăмла ăмăртăва сарса йанă. „Красная Шатьма" колхозри 14 çынтан тăракан Никифоров йулташ бригади Храмков йертсе пыракан грузчиксен бригадипе ăмăртса ĕçлет. Ĕçре икĕ бригадă та пĕр—пĕринчен йулмаççĕ, нормăна йалапах ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ. Çапла ĕçленĕрен те ĕнтĕ Буденный йачĕпе тăракан колхоз 550 кубла метр вăрман турттарса кăларса, плана 100 процент тултарчĕ. Халĕ ку колхозран вăрманта тата 12 çын ĕçлеççĕ. Акă тата „Коминтерн" колхоз вăрманта ĕçлеме договор туман пулсан та 100 кубла метр касса хатĕрлерĕ.

Хăшпĕр колхоз председателĕсем вăрманта хăйсем ĕçлесе стахановла ӳсĕмсем кăтартаççĕ. Сăмахран: „Новая Жизнь" колхоз председателĕ Шумилов йулташ 15 кун вăрманта ĕçлерĕ. Нормă тăрăх кашни кун унăн 15 кубла метр турттармала пулнă пулсан, 25 кубла метр турттарса пычĕ. Вăл йертсе пыракан колхоз февралĕн 18-мĕшне 625 кубла метр турттарса хатĕрлесе плана 85 процент тултарчĕ. Колхозниксем договорта кăтартнине çак кунсенчех тултарма сăмах пачĕç.

Колхоз председателĕсем хăйсен февралĕн 18-мĕшĕнче пулса иртнĕ канашлăвĕнче вăрман хатĕрлев ĕçĕ çинчен сӳтсе йавнă хыççăн пĕр сасăпах хĕллехи çезонра ĕçлемелли плана хăвăрттăн тултарма пулчĕç. Траксем Шăхасан районне социалисăмла ăмăртăва чĕнчĕç.

Закамский.

4 кун хушшинче 100 теннĕ

ШĂХАСАН. Йамашри „Ударник" колхоз членĕсем вăрман хатĕрлевĕнчи стахановла уйăхлăха хутшăнса хастарлăн ĕçлесе пыраççĕ. Малтанхи кунсенчех бригадăпа бригадă тата уйрăм колхозниксем хушшинче социалисăмла ăмăртса ĕçлессине сарса йачĕç.

Стахановла ĕç меслечĕсемпе ĕçлесе хăшпĕр колхозниксем çав тери лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Акă, 6-мĕш бригадăри Григорий Павлов 4 кун хушшинче нормăна 200—300 процентшар тултарса пырса 100 теннĕ ĕçлесе илчĕ. Çавăн пекех В. Лазарев, А. Йевлампйева колхозниксем те вăрман ĕçĕнче тăрăшса ĕçлеççĕ.

Колхоз февралĕн 14-мĕшне 461 кубла метр вăрман турттарса плана 89 процент тултарнă.

Ал Иванов.

Трахомпа кĕрешессине вăйлатмала

СĔНТĔРВĂРРИ. Нумай йалсоветсенче трахсестрасем чунтан тăрăшса ĕçленипе трахомпа чирлекенсен шучĕ çулсерен сахаланса пырать. Икĕ-виçĕ çул кайарах районĕпе трахомпа чирленисем 45—47 процент пулнă пулсан, халь 20—25 процент анчах йулнă, хăшпĕр йалта 5—7 процент.

Çапла пулин те трахома тĕпĕпех пĕтерес ĕç районра çителĕклĕн пулса пымасть-ха. Хăшпĕр йалсоветсенчи трахсестрасем ĕçукçи илнисĕр пуçне урăх нимĕн те тумаççĕ. Акă Урхас-Кăшкăри Василйева трахсестра ернере икĕ-виçĕ кунтан ытла ĕçлĕмест, виçĕ уйăх хушшинче те пĕр çынна та сыватман. Малти-Пукашри Малышева, Йуртакассинчи Павлова та йапăх ĕçлеççĕ. Районри сывлăх пайĕнче ĕçлекенсем кун çинчен пĕлеççĕ пулин те, нимĕнле мерăсем те йышăнмаççĕ.

Трахсестрасем хушшинче примерлă ĕçлесе пыракансем те пур. Сăмахран, Вĭта Пукашри Нина Григорйева районра паллă трахсестрасенчен пĕри шутланса тăрать. Иртнĕ уйăхра 73 çынтан 13-ĕшне трахомран сыватнă. Кашни кун 50—60 çын пăхать, ăна аван ĕçленĕшĕн пуринчен ытла ваттисем ырлаççĕ. Çавăн пекех Сĕнтĕр пуçĕнчи трахсестра Морозова та иртнĕ уйăхра 16 çынна сыватнă, кунне 35—40 çын пăхать. Трахпункта пыманнисене килĕсене кайса пăхса çӳрет. Хăй патне пынă çынсене трахом чирĕ çинчен кĕнекесем вуласа кăтартать йе хăй каласа парать.

Вл. Сидйаков.
Ив. Йефремăв.

пулнă. Революци „продоволствилĕ йеркесĕрлĕхсенчен" пуçланнă; „йĕркесĕрлĕхсем" çĕнĕрен туса хунă правителствăна та хăратнă, йал çĕр ыйтнă сасă паман-ха. Çĕр çинчен шарламасăр хăварса, Вăхăтлăх правителствă мартан 9-мĕшĕнче Хусан губернинчи хресченсене помешчиксене хирĕç тăнăшăн суда памала тунă.

Анчах икĕ ерне те иртмен, йал хăйен çинчен аса та илтернĕ. „Хресченсем „Александровкă" имениййĕ çине тапăнса кăштах çаратнă„[1]), тесе пĕлтернĕ Курск губернинчен. Рйазань губернинчи Трубецкий имениййĕн управляйушчийĕ, хресченсем именине хăйсен аллине памa хетĕртсе ыйтаççĕ, тесе ӳпкелешнĕ. Мартăн 16-мĕшĕнче Шингарйов Мускав губернинчи хресченсем пăлханни çинчен калакан телеграммă илнĕ. Çавăн пек пĕлтерĕвĕсемех пур çĕртен те килсе тăнă.

Пуçланса кайнă хресчен йухăмне Вăхăтлăх правителствă кивĕ майпа пусарма хăтланса пăхнă: „лăплантарма" мартăн малтанхи çурăйăхĕнче йала çарсем кăларса йанă. Курск, Могилйов тата Перм губернисене отрйадсем йанă. Анчах Лвов—Милйуков—Шингарйов правителстви йала кивĕ майпа лăплантарма çуккине часах туйса илнĕ. Простă пусарса лартма май килмен. Мĕнле те пулин уступкăсем кирлĕ пулнă. Мартăн 12-мĕшĕнче правителствă Николай II çĕрĕсене—кабинет çĕрĕсене—хысна валли туртса илни çинчен пĕлтернĕ. Мартăн 16-мĕшĕнче вара çав постановленипех Романов йăхĕсен çĕрĕсене, удел çĕрĕ текеннисене пурне те туртса илмеле тунă.

Мартăн вунçичĕмĕшĕнче Лвов правителсти хресченсем патне декларациi çырса кăларнă.

„Çĕр реформи... çитес Учредителлĕ собранинче пĕр сăмахсăр черете тухса тăрĕ", тесе сăмах панă Вăхăтлăх правителствă. „Çĕр ыйтăвĕ темĕнле тытса илнипе пурнăça кĕме пултараймасть,—тесе каланă малала çав декларациi.—Вăйпа хĕсĕрленипе çаратни економикăлă хутшăнăвĕсенчи чи усал та хăрушă меслет"[1]. Вăйпа хĕсĕрлемеле марри çинчен вĕрентни хресченсене çеç тивнĕ, правителствă хăйне валли шăпах вăйпа хĕсĕрлессине хăварнă. Апрелĕн 8-мĕшĕнче министр-председател, вăлах шалти ĕçсен министрĕ, княç Лвов, губерни комиссарĕсене хресченсен пăтранăвне, „çар команлисене чĕнсе илесси умĕнче чаранса тăмасăр", мĕн пур майпа пусарса лартма хушнă. Вăхăтлăх правителствăн вырăнта уйăрса лартнă комиссарĕсемпе Государствă думин провинцисене йанă представителсем министр-председателĕн кăтартăвĕсене тăрăшса пурнăça кĕртнĕ.

Правителствăн кaрателлĕ ĕçне есер-меншевиксем витсе тăнă. Есерсен партийĕн Петроград облăç конференцийĕ аграрлă йухăма хирĕç тăнă. Çав конференцире çапла çирĕплетсе каланă:

„Уйрăм хуçасем тытса тăракан çĕрсене халех кирек мĕнле туртса илме хăтланни те йалхуçалăх пурнăçĕ тĕрĕс йухса пырассине пĕтерсе лартма пултарать... Удел, кабинет тата уйрăм хуçа çĕрĕсене Учредителлĕ собрани саккун кăларнă йĕркепе çеç конфискацилеме йурать. Учредителлĕ собрани халăха çĕрпе ирĕк парĕ"[2].

Есерсем буржуазирен реакцилĕрех пулнă: Вăхăтлăх правителствă пĕр темиçе кун кайарах удел-па кабинет çĕрĕсене конфискациленĕ. Рабочисемпе салтак депутат совечĕсен Пĕтĕм Российăри канашлăвĕ апрелĕн 3-мĕшĕнче меншевиксем сĕннĕ тăрăх резолюци йышăннă, унта çапла каланă:

„Аграрлă йĕркесĕрлĕхсем хресченсене мар, контрреволюцине çеç усăлă пулма пултараççĕ. Влаç халĕ халăх аллинче тăнине тата халăх учредителĕ собранире çĕр ыйтăвне хăй татассине асра тытас пулать"[1]. Хăратса вăйпа хĕсĕрлени аграрлă йухăма чарса лартайман.

„Апрелте хресченсен ăспуçĕнче çĕр ыйтăвне татас тĕлĕшпе пулнă улшăнăвсен малтанхи паллисем сиксе тухрĕç, çав улшăнăвпа пĕрле вырăнсенчен телеграмсемпе пĕлтерни хыпарсем çите пуçларĕç"[2] — типĕ канцелйари чĕлхипе çапла çырнă шалти ĕçсен министрĕ Вăхăтлăх правителствă патне. Помешчиксем хресченсене хирĕç кĕрешес ĕçре çĕнĕ тактикă тытса пыма кирлĕ тесе шутланă.

„Текех патакпа пуçпулса тăмамай çуккине помешчиксем ăнланса илчĕç,—тенĕ Ленин,—вĕсем ăна лайăх ăнланса илчĕç, вĕсем ĕнтĕ пуçпулса тăрас хăйхи меслете куçаççĕ, çав меслет Российăшăн çĕнĕ йапала пулса тăрать, хĕвеланăç Йевропăра вăл тахçанах пур... Революцисем помешчиксемпе капиталиссене вĕрентеççĕ, вĕсем халăха улталапа, илĕртĕвпе тытса пыма вĕрентеççĕ; йăпшăнса майлашăнмала, пиншак çине хĕрлĕ значок çакса йамала тата, çĕрçăташшĕсем пулсан та, çапла каламала: „Епĕр: — революцилĕ демократи, пушалстă, тăхтăр кăна, епĕр сире валли пурне те тăвăпăр"[3].

Апрелĕн вунпĕрремĕшĕнче правителствă „Колчаксене сыхласси çинчен" саккун пичетлесе кăларнă. Чаннипе вăл помешчиксене вĕсен çĕрне, тара тӳлевне тата „Халăх пăтранас" мĕн пулсан вĕсем—помешчиксем—тырă акма кăларнă тăкака", сыхлама шанчăк панă.

Шингарйов хресченсене çураçтару камери тунипе лăплантарма хăтланнă. Çураçтару камеринче помешчиксем ĕçе татса паракансем пулмала пулнă. Помешчиксемпе хресченсене çавăн пек çураçтарма хăтланнине Ленин çапла хак панă:

„2 пин теçетин çĕр тытакан пĕр çĕрхуçи, 2 пин теçетин çĕр тытакан виççĕр хресчен çемйи —çапла ĕнтĕ Российăри ĕçсем. Виççĕр хресчен „пĕр помешчик ирĕккĕн килĕшессине кĕтмеле"[2].

Çакă вăл çĕрхуçисене шăпах та йурăхлă пулнă. Шингарйов çавăн пек „ирĕккĕн килĕшес" идейăпа усă курма шут тытнă.

Апрелĕн çирĕм пĕрремĕшĕнче çĕр комитечĕсем çинчен положени кăларнă. Шингарйовăн биографĕ кадет А. Г. Хрущчев çĕр комитечĕсен задачисем пирки министр мĕн шутлани çинчен çапла каласа парать:

„А. И. (Шингарйов. Ред.) малтан шутланă тăрăх çĕр комитечĕсене çĕр ыйтăвĕ пирки материалсем хатĕрлесе хума çеç организацилемеле пулнă

А. И. малтан хатĕрленĕ пройект тăрăх комитетсене нимĕнле ĕçтăвас Функци те, çĕр хутшăнăвĕсене нимĕнле тĕкĕнме те права паман"[3].

Хрущчев хăй, çĕрĕç министрĕн помошникĕ пулнăскер, Аслă комитетăн малтанхи ларăвĕнчех çав ĕç кирли çинчен çапла ăнлантарса панă:

„Аграрлă йухăм ӳссе пырса çĕр-шывăн пĕтĕм хуçалăх пурнăçне аркатса тăкас хăрушă формăна куçать. Вырăнсенче халех çĕр комитечĕсем организацилес ĕçе тытăнмала"[1].

Шингарйов хатĕрленĕ положени тăрăх центрта Аслă çĕр комитечĕ, вырăнсенче губернипе уйес комитечĕсем туса хунă Положени тăрăх вулăсра комитет тусан та тумасан та йуранă. Çĕр комитечĕсем çинчен кăларнă положенийе Ленин „мошеникла çырнă помешчиксен саккунĕ" тесе каланă.

„Çав мошеникла çырнă помешчиксен саккунĕ тăрăх комитетсене çапла тунă:—тесе çырнă Ленин,—уйес комитечĕ вулăсринчен демократисĕртерех, губерни комитечĕ уйесринчен демократисĕртерех, Аслă комитет губерниринчен демократисĕртерех[2].

Чăн организацилесси кăштах урăх çулта пулса пынă. Апрелĕн 21-мĕшĕнчи положени тухаччен-ех чи малтан вулăс комитечĕсем пуçланса кайнă. Вĕсем уйрăмах апрелте хăвăрт ӳссе пынă. Вăхăтлăх правителствăн комиссарĕсене организацилеме хушнă губернипе уйес комитечĕсем йерипен, вулăс комитечĕсем хыççăн тенĕ пек, пулса пынă, вулăс комитечĕсене ирĕксĕрлесе йертсе пынă.

Аслă çĕр комитечĕн составĕ унăн политикине йăлтах палăртса тăнă. Вăхăтлăх правителствă уйăрса лартнă тăрăх комитета 25 çын кĕнĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ кадетсем пулнă, Хресчен сойузĕпе Пĕтĕм Российăри хресчен совечĕн представителĕсем—6, государствă думин Вăхăтлăх комитетĕнчен—3 та та политикăла партисенчен пĕрер çын. Çавăнпа пĕрлех кадетсемпе сылтăмраххисем йулашкинче 6 вырăн йышăннă. Политикăлă економи профессорне А. С. Посникова, IV Государствă думин членне, прогрессиса, министр Коноваловпа пĕр партирех тăнăскерне, Аслă çĕр комитечĕн председателĕ туса хунă. Профессор çавăнпа пĕрлех хресчен байкпе дворйан банкĕн управляйушчийĕ пулнă.

Çав „пĕр вăхăтрах икĕ ĕç туни" буржуази куçĕпе мĕнче Посников хресчене помешчикпе „çураçтарма" йурăхлă курăннă, пулмала, Малтанхи ларăврах председател, Аслă комитетăн задачисене палăртса, çаплах каланă:

„Халхи вăхăтра хытă сарăлнă пĕр агашăва, çитес çĕр реформинче пĕтĕм çĕре хуçасенчен ахалех туртса илмеле имĕш текен шухăша сӳрсе йамала. Комитетăн вăл пулас çук тесе каламала"[1].

Аслă çĕр комитечĕ хресченсенчен кăна хӳтлесе тăмала пулнă. Помешчиксемпе буржуазин чăн ĕçĕ çав организаци хутшăнмасăрах пулса пынă. Аслă çĕр комитетĕнче çĕр реформин пройекчĕ пирки вĕçĕ-хĕррисĕр тавлашса, ĕçе пуçпех татса хурассине мĕн пур майпа тăснă. Вăхăтлăх правителствă, хăратса илнипе карателлĕ експедицисенчен çураçтару камерисем патне куçса, влаçа йалтах хăйĕн аллине йарса илме май çитессине кĕтсе, çапла пăркаланса тăнă.

---

[1] Центрархив. Крестьянское движение 1917 г. Москва, Госиздат, 1927 г., стр. 3

[1] Постановление Временного правительства. Вестник „Временного правительства" № 14, 21 марта 1917 г.

[2] Резолюция Петроградской конференции социалистов-революционеров. „Дело" № 9, 7 марта 1917 г.

[1] Центрархив. Всероссийское совещание советов рабочих и солдатских депутатов. Стенографический отчет. Москва, Госиздат, 1927 г., стр. 312.

[2] ЦАОР Фонд 406. Главное управление по делам милиции (главмилиция), отдел II, дело № 15а, часть 1, лист 219.

[3] Ленин В. И. Речь по аграрному вопросу 22 мая 1917 г. Сочинения, том XX, стр. 411.

[1] Постановление временного правительства. „Вестник Временного правительства" № 31, 14 апреля 1917 г.

[2] Ленин В. И. „Добровольное соглашение" между помещиками и крестьянами. Сочинения, том XX, стр. 169.

[3] Хрущев А. А. И. Шингарев. Его жизнь и деятельность. Москва, 1918 г., стр. 98—99.

[1] Главный земельный комитет. „Дело народа" № 54, 20 мая 1917 г.

[2] Ленин В. И. Новый обман крестьян партией эсеров. Сочинения, том XXI, стр. 389.

[1] В главном земельном комитете. „Речь" № 117, 20 мая 1917 г.

Петровский, Ворошилов, Федько тата ытти йулташсене ССР Союзĕн орденĕсене пани

Февралĕн 27-мĕшĕнче ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ **М. И. Калинин** орденсемпе наградăланă йулташсене ССР Союзĕн орденĕсене панă. Украинă СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателне, ССР Союзĕн Верховнăй Совет президиум председателĕн заместителне **Г. И. Петровский** йулташа, вăл 60 çул тултарнă май тата рабочи класпа хресченсем умĕнче калама çук пысăк тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн наградăланăскерне, Ленин орденĕ панă.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ çирĕм çул тултарнă май, совет влаçĕн тăшманĕсене хирĕç пынă çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн тата хăйсене пĕр шеллемесĕр хăйулăн çапăçнăшăн, çавăн пекех тата Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн чăçĕсенче тата подразделенийĕсенче çар ĕçне, политикăна тата техникăна вĕренес тĕлĕшпе калама çук чаплă çитĕнӳсем тунăшăн ССР Союзĕн Верховнăй Совет президиумĕн указĕпе Хĕрлĕ Çарăн полководецĕсене, командирĕсене тата политработниксене чылай наградăланă.

М. И. Калинин Оборонă Халăх Комиссарне Совет Союзĕн Маршалне **К. Й. Ворошилов** йулташа Ленин орденĕ тыттарсан, залра ларакансем тăвăллă оваци тунă. Тимĕр пек çирĕп Нарком хыççăн, рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн чаплă командирсемпе начальниксен составне наградăсем панă. Вĕсем шутĕнче—пĕрремĕш рангри командарм **Федько** йулташ, иккĕмĕш рангри çар комиссарĕ **Мехлис** йулташ, иккĕмĕш рангри çар комиссарĕ **Шчаденко** йулташ, пĕрремĕш рангри командарм **Шапошников** йулташ тата ыт. те.

Наградă илнисен йачĕпе пĕрремĕш рангри командарм Федько йулташ сăмах тухса каланă.

Çавăн пекех Ленин орденĕ Йем. Йарославский йулташа та панă. (ТАСС).

Белоруççи СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн VIII-мĕш Çеççийĕ

МИНСК, Февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Пайан, 7 сехетре каçхине Белоруççи СС Республикĕн Правителствă Çуртĕнчи сĕессен залĕнче Белоруççи СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн VIII-мĕш Çеççийĕ уçăлчĕ. Çеççи Белоруççи СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ ырланă Белоруççи СС Республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положенине сӳтсе-йавса çирĕплетет.

Çеççи ĕçĕнче ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутачĕсем—Белоруççи халăхĕ шанса суйласа йанисем 36 çын хутшăнса ĕçлеççĕ.

Белоруççи СС Республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положени пройекчĕ çинчен Белоруççи СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиум Председателĕн заместителĕ Н. Й. Наталевич йулташ доклад туса панă.

128 çын пулăшу илнĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Районра 1937 çулта нумай ачаллă амăшсем мĕн пурĕ 128 çын государствăран укçан пулăшу илнĕ. Вăл шутран çиччĕшĕ 4-шер пин тенкĕ илнĕ.

Гр. Смирнов.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Лесоруб" ертелĕн йĕлтĕрçĕсен команди „Спартак" обшчест вин йалти ертелĕсем хушшинче йĕлтĕрпе чупса Пĕтĕм Союзра пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Ӳкерчĕк çинче: „Лесоруб" ертел командин йĕлтĕрçисем (сулахайран сылтăмала) К. Н. Белјанин, Раиса Карпова, Анна Карпухина, Олга Йафонова, Йегор Лаврентйев, Матвей Карпухов тата Василий Степанов.

Мартăн 8-мĕш умĕн

Мартăн 8-мĕш кунĕ çывхарса килет. Вăл кун пĕтĕм тĕнчери ĕçхĕрарăмĕсем фашисăма хирĕç кĕрешес ĕçре хăйсем пĕтĕм тĕнчипех пĕр шухăшлă пулнине, хăйсем пĕтĕççе тăнине тата вăйне кăтартса параççĕ. Кăçалхи çул мартăн 8-ш халăх фронтне тата ытларах тĕреклетес лозунгпа, хĕрарăмсен йышлăран та йышлă массисене тискерленсе кайнă фашисăма хирĕç кĕрешес ĕçе йавăçтарас лозунгпа иртет.

Мартăн 8-мĕш—Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем Ленин—Сталин парти йалавĕ айĕнче, рабочи класăн социализăм ĕçĕшĕн пынă пĕтĕмĕшлĕ кĕрешĕвĕнче тунă аслăран та аслă çитĕнӳсене пăхса тухмали кун пулса тăрат.

ССР Союзĕнче хĕрарăм пĕтĕм социализăм строителствине пур йенчен те пĕртан правалă хутшăнса ĕçлекен пулса тăчĕ.

Социализăмлă демократисăмăн çĕнĕ çентерĕвĕсемпе паллă пулнă 1937 çул, Совет Союзĕнчи хĕрарăмсемшĕн те вĕсен политикăлă активлăхне, вĕсене çĕршыв управленине йавăçтарассине çĕнĕрен çӳле çĕклесе йанă çул пулса тăчĕ.

Совет çĕршывĕнчи хĕрарăмсем пурте пĕр çын пек коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕшĕн сасăларĕç.

Мартăн 8-мĕшне уйăвлама хатĕрленме халех тытăнас пулат ĕнтĕ. Йалти политçут учрежденийĕсем—вулав çурчĕсем, колхоз клубĕсем, кулјтурă çурчĕсем çак ĕçсене тума тивĕç:

Граждăн вăрçин хĕрарăм-геройнисем çинчен, Испанири хĕрарăмсем фашисăма хирĕç паттăрăн кĕрешни çинчен, Испани пролетариачĕн калама çук чаплă кĕрешекенĕ Долорес Ибаррури çинчен, Йапони интервенчĕсене хирĕç фронтсенче хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешекен Китай хĕрарăмĕсем çинчен, пĕрлĕхлĕ халăх фрончĕ тунă çĕнтерӳсем çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен тата ытти ыйтусем тăрăх хаçатсем вуласа памала, каласусем, докладсем туса иртермеле.

Совет хĕрарăмĕсем тунă çитĕнӳсемпе ӳсĕмсен итогĕсене çутатса парас йатпа, „Сталинла Конституци тата ССР Союзĕнчи хĕрарăмсем", „ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн хĕрарăм-депутачĕсем", „ССР Союзĕнчи чи лайăх хĕрарăм-стахановкăсем" т. ыт. çавăн пек темăсемпе вечерсем туса иртерес пулат.

Совет влаçĕ работницă тата колхозницă хĕрарăмсем пирки тăрăшнине, социализăмлă çĕнĕ пурнăçпа йăлашăн кĕрешнипе çутатса паракан выставкăсем организацилемеле.

Хĕрарăм граждăн вăрçине хутшăнса кĕрешнине, социализăм тăвас ĕçе, çĕршыва сыхлас ĕçе хутшăнса кĕрешни çинчен калакан кинокартинăсем („Дочь родины", „Чапаев", „Дочь партизана") пăхассине организацилес пулат.

Хĕрарăмсем вајји сывлăшран тапăнассинчен сыхланма вĕренмели, санитари ĕçне вĕренмели кружоксем, Ворошиловла тĕл переկенсен кружокĕсем т. ыт. те организацилес пулат.

Политçут учрежденисем иртерекен мĕн пур массăлă ĕçсене те çапла йĕркелес пулат: вăл ĕçсемпе пур хĕрарăмсене те—колхозницăсене, йединоличницăсене, килхуçи хĕрарăмĕсене пурне те çавăрса илмеле пултăр. Çавăнпа та каласусене, вулавсене вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсенче кăна мар иртермеле, вĕсене колхозниксен, йединоличниксен килĕсенче те туса иртерес пулат.

Н. КРУПСКАЙА.

И. П. Павлов академик вилни 2 çул тултарчĕ

ЛЕНИНГРАД, февралĕн 26-мĕш. (ТАСС). Икĕ çул кайарах вырăссен аслă учонăйе, ывăнма пĕлмен експериментаторĕ тата хăйулă тĕпчевçĕ Иван Петрович Павлов академик вилнĕ. Унăн йачĕпе тăракан Ленинград патĕнчи Павловă йалĕнчи биолги станцинче Павлов наследине тĕплĕн пăхса тухаççĕ.

Л. А. Орбели академик йертсе пынипе станцинчи ăслăлăх сотрудникĕсен пысăк ушкăнĕ темиçе ăслăлăх ыйтувĕсене татса пама хатĕрленеççĕ, вĕсен пахалăхĕ пирĕн çĕршывшăн çеç мар, ытти çĕршывсемшĕн те пысăк вырăн йышăнса тăрат. Вĕсем хушшинче чи малтан наследственнăç проблеми пулат. Иван Петрович чи кирлĕ, пысăк нервăсен ĕçĕсене, еволюцицилĕ физологине вĕренмели ăслăлăх центрĕсем тума тăрăшнă.

Вăл вилнĕ хыççăн Павловăра çак проблемăсемпе ĕçлекен икĕ лаборатори туса хунă. Лабораторисенче çĕнĕ приборсем кирлĕ таран пур.

Иван Петрович Павловăн ăслăлăх тĕлĕшпе туса хăварнă калама çук пысăк ĕçĕсене икĕ майпа хатĕрлеме пулат: проблемăсене уйрăммăн илсе татса пама пулат тата ыйтусене пĕтĕмĕшпе пĕрле илсе ĕçлеме пулат. Л. А. Орбели академик йертсе пынипе ĕçлекенсен ăслăлăх коллективĕ, совет ăслăлăхĕшĕн иккĕмĕш çула йышăнма (И. П. Павлов ларгнă сарлака çула, проблемăсене пĕтĕм пĕрлĕхĕпе çавăрса илме йăвăр мар тесе шутлат).

Икĕ çул хушши тунă ĕçсен итогĕсем биологи станцине партипе правителствă уйрăмах хытă çаврăнса пăхса пулăшса пынипе чылай йăвăр ăслăлăх опычĕсене тума тата генилĕ учонăй И. П. Павлов кăларса тăратнă пур проблемăсене те чаплăн татса пама май пуррине кăтартса параççĕ.

Испанири фронтсенче

Испанин Оборонă министерстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 25-мĕшĕнче хĕвелтухăçри фронтăн пур секторĕсенче те лăпкă тăнă.

Университет хулинче республиканцăсем йалхуçалăх шкулĕн çуртĕ айĕнче минă сиктерсе йанă. Минă сиксе çурăлса кайнипе пăлхавçăсен çирĕплетнĕ форпостне çĕмĕрнĕ тата вĕсене чылай çухатусем кӳнĕ.

Еспаньол агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Харама йуханшыв патĕнче (Мадридран кантăрпа хĕвелтухăç йенеле) республикă чăçĕсем темиçе хутчен те разведкăла ĕçсем туса иртернĕ. Çавăн хыççăн темиçе çапăçу та пулса иртнĕ. Республиканцăсемшĕн вăл çапăçусем ăнăçлă пулнă, вĕсем пăлхавçăсен малти позицийĕсене темиçе те йышăннă.

Çав кун каçхине пăлхавçăсен салтакĕсем темиçе çĕр çын республикă çарĕсем йенне тарса каçнă.

Барçелонăран пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 25-мĕшĕнче фашиссен 6 гидросамолјочĕ Сагунто (Валенсирен çурçĕрпе хĕвелтухăçнеле) çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнă пирки çав портра тăракан Англи судни çинче виçĕ çын аманнă. Çав кунхинех пăлхавçăсен икĕ гидросамолјочĕ Каталони çыранĕсем хĕрринче Ллјасос тата Бланес йатлă йалсем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. (ТАСС).

Негрин сăмахĕ

ПАРИЖ, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Испанин министрсен Совечĕн председателĕ Негрин радио тăрăх сăмах тухса каланă. Хăй сăмахĕнче вăл çапла каланă:

„Испанире вăрçă пĕтмес-ха, мĕншĕн тесен Йевропăри государствăсем апла тăвасшăн мар. Хӳтлĕхсĕр хуласем çине бомбăсем пăрахнăшăн, Вăтаçĕр тинĕсри пиратла ĕçсемшĕн, республикă çарĕсен Теруелрен тухса каймала пулнăшăн Испани ĕçĕсене хутшăнас мар тесе калакан политикă ответлă. Демократилĕ çĕршывсем Испани республикине вăрçă материалĕсем сутма вĕçĕмренех отказ парса тăнă вăхăтра, фашисла государствăсем Франкона вăрçă валјли мĕн кирлине йалтах парса тăраççĕ.

Фашиссене çапла пулăшассине чарса лартчăр кăна,—тенĕ Негрин,—вара Испанири вăрçă темиçе ерне хушшинчех пĕтĕ...

Италипе Германи пăлхавçăсем йышăннă территори çине хĕçпăшалсем йарса тăнине пула республикă Теруеле çухатрĕ. Ку çухату пирĕншĕн аван мар йапала, анчах вăл пирĕн пуççене пĕрре те устармаст. Епĕр хамăр тăван çĕршывăн пуласлăхне ĕненетпĕр. Ĕнер республикă хăйĕн дисциплинăлă тата шанчăклă çарĕ пулассине пĕлсе тăнă пекех, вăл пайан ĕнтĕ çакна шанса тăрат: ыран унăн татăклăнах çĕнтерӳ тума кирлĕ материалсем пулĕç".

Муссолини Испанире пысăк наступлени пуçлама шутлат

ПАРИЖ, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Монд агентстви Миланран пĕлтернĕ тăрăх, йулашки виçĕ ерне хушшинче Итали порчĕсенчен кашни кунах Испанине салтаксем тата çар снарйаженисем тийенĕ пароходсене ăсатаççĕ. Салтаксене хĕллехи обмундированиле тумлантарнă.

Илнĕ хыпарсем тăрăх, Муссолини Испанире пысăк наступлени пуçлама шутлат.

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче Германин шпионла центрне тупнă

ВАШИНГТОН, февралĕн 26-мĕш. Йустици департаменчĕн (Йустици министерствин) уйрăм пайĕн начальнике Гувер пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче шпионла ĕçсем тунăшăн, уйрăммăн илсе, „Йевропăри çĕршыва" (Германийе тесе шутлаççĕ) Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен çар çекречĕсене сутнăшăн айăпласа, виçĕ çынна арĕсленĕ. Арĕсленĕ çынсем çаксем пулаççĕ: Иоганна Гофман (Германири Дрезденран)—Германин „Йевропа" парахочĕ çинчи парикмахер, Гунтер Румрих—Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен çарĕнче кĕçĕн офицер пулнăскер (вăл унтан тарнă пулат) тата Ерих Глазер—Америкă салтакĕ, Нйу-Йорк сывăхĕнчи çар аеродромĕнче службăра пулнăскер.

Шыраса тупнă материалсем кăтартнă тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче шпионла центр пулнă. Румрих, хăйне государствă департаменчĕн чиновникĕ пек кăтартса, государствă департаменчĕн (йутçĕршыв ĕçĕсен министерстви) паспорт пайĕнчен 50 паспорт илме хăтланнă. Çав паспортсене унăн шпионла центрăн Йевропăри агенчĕсене памала, вара вăл агентсен, хăйсене Америкă граждăнĕсем пек кăтартса, Совет Союзне килсе кĕмеле пулнă.

Йустици департаменчĕн уйрăм пайĕ, Румрих Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен çарĕ пирки Йевропăна информацисем парса тăнă иккенне палăртнă. Гувер çапла каланă: Панамă каналĕ таврашĕнчи çыран укрепленийĕсем (Румрих унта кĕçĕн офицер пулса службăра тăнă пулнă) çинчен панă информацишĕн хăй йутçĕршыв правителствинчен укçа илнине Румрих йышăннă,—тенĕ. Малалла Румрих çакна йышăннă: вăл Иоганна Гофман урлă тата Нйу-Йорка пыракан пароходсем çинче ĕçлекен ытти çынсем урлă шпионла пĕлтерӳсем парса тăнă. Вăл çавăн пекех тата çĕнĕрен тăвакан икĕ авианосцă çинчен, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен çарĕпе тинĕс-çар флочĕн ытти çекречĕсем çинчен хăй сведенисем илнине йышăннă.

Румрих,—тет Гувер,— Глазертан Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен çарĕпе сывлăш флочĕн конфиденциалĕ шифрисене (тĕрлĕ вăрттăн хыпарсене, çырусене сӳретме шухăшласа кăларнă паллăсем) илнĕ, вĕсене йутçĕршыв правителствине панă. Глазер хăй панă кăтартусенче Румрих панă кăтартусен тĕрĕслĕхне çирĕплетнĕ.

Арĕссем татах пуласса кĕтеççĕ. (ТАСС).

Итали самолјотсем ăсатат

Февралĕн 25 мĕшĕнче Специйа портĕнчен (Италин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче) Италин „Аниене" йатлă парохочĕ, авиаци бомбисем, салатса хунă самолјотсем тийесе тухнă. Вĕсене Испанири пăлхавçăсене çитерме пама палăртса хунă.

Папанинцăсем Ленинграда çитес умĕн

Хаклă хăнасем—Папанин, Кренкел, Ширшов тата Федоров йулташсем çитессине Ленин хулинчи ĕççыннисем пысăк хаваслăхпа чунтан кĕтеççĕ.

Ленин йачĕпе тăракан заводри рабочи-художниксем папанинцăсен ĕçне çутатса паракан выставкă тăваççĕ. Кунта куçса çӳрекен пăр çинче историлĕ хĕл каçнине кăтартса паракан ӳкерчĕксем, картинăсем тата пысăк панно пулаççĕ.

Пионерсен Дворецĕн çамрăк хуçисем мухтавлă папанинцсене кĕтсе илнĕ çĕре делегацине каймачи лайăх çĕр активиса уйăраççĕ. Ачасем Арктикă геройĕсене Пионерсен Дворецне чĕнме йышăннă. (ТАСС).

„Йермак" „Мурманеца" буксира илнĕ

Февралĕн 27-мĕшĕнче 15 сехетре „Йермакпа" „Мурманец" çурçĕр широтин 62 градусĕпе 23 минутинче тата хĕвеланăç долготин 5 градусĕнче пулнă. О. Й. Шмидт пĕлтернĕ тăрăх, шторм лăпланнă. „Йермак" „Мурманеца" буксира илнĕ. Карапсем Ленинграда çул тытаççĕ. Карапсем çинче пурте йĕркелех.

* * *

Çурçĕр тинĕс çул Тĕп управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, паттăр походран таврăнакан „Таймырпа „Мурман" Мурманска февралĕн 28-мĕшĕнче 17-сехетре çитессе кĕтеççĕ. (ТАСС).

Красников йултăшăн пархатарлă ĕçĕ

ПАТĂРЙЕЛ. Çак кунсенче педучилишчĕри комсомол комитечĕн секретарĕ Василий Илйич Красников йултăш хамăрăн тăван çĕршыв уменче пархатарлă ĕç тунине кăтартса пачĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă йубилейе хатĕрленнĕ май, Красников йултăш педучилишчăра çĕрлечченех ларнă. Киле кайма тăрсан, коридора тĕгĕм тухса тулнине курнă, Педучилишчăра никам та пулман. Анчах вăл хăраса ӳкмен, кашни кабинета кĕрсе пăхнă. Кабинетсенчен пĕринче техничкăсем кăмака çумне типĕтме тултарнă вутă пĕтĕмпех тивсе кайса çунма пуçланă. Пĕтĕм педучилищă çуртне вут хыпса илме тытăннă. Йавăç çурт йалтах çунса кайма пултарнă.

Красников комсомолец пушар пулассине вăхăтра сирсе йанă.

Пархатарлă ĕç тунăшăн, педучилищă дирекцийĕ В. И. Красников йултăша тавтуса парне пачĕ.

Воронов. Сивлин, Иагудин.

ПĔЛТЕРӲ

Мартăн 3-мĕшĕнче 6 сехетре Пичет çуртĕнче (3-мĕш хутлăх 18-мĕш пӳлĕм) Шупашкар хулинчи суту-илју организацисенче ĕçлекенсен канашлăвĕ пулат.

КУН ЙĔРКИ:

Суту-илјӳпе финанс планне тултарни çинчен (вырăнсенчен докладсем тăваççĕ).

Канашлăва пыма çак учреждениcемпе организацисен руководителĕсене чĕнеççĕ.

Чăвашторг, Суту-илјӳ Халăх комиссариачĕ, Çимĕç промышлĕнăç халăх комиссариачĕн уполномоченнăйĕ, Вырăнти промышленнăç халăх комиссариачĕ, Чăвашпотребсойуз, Промысла кооперативĕсен сойузĕ, „Бакалейа" магазинĕсен, Инвалидсен кооперативлă сойузĕ, Чебторг, Чебторгин, магазинĕсен директорĕсем, çăкăр-булкă пĕçерекен пренĕк-канфет тата кăлбаси тăвакан предприйатисен руководителĕсене.

„Чăваш Коммунĕ", „Красная ЧувашиЯ" хаçатсен редакцийĕсем

Ответлă редактор ĕçĕсене тăваканĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Академи театрĕнче

Мартăн 1-мĕшĕнче
Чăвашла спектакль
М. ГОРЬКИЙ
„НА ДНЕ"
(4 пайлă)
Художествă руководителĕ Йе. А. ТОКМАКОВ лартат.
Художник Н. Ф. БАЙКОВ.
Талон № 123. Абонемент № 4. Талон № 12.

Мартăн 2-мĕшĕнче
Чăвашфилармонийĕ
МУЗЫКĂЛĂ КОМЕДИ
ХАВАСЛĂХ
лартат.
Талон № 124.

Рационализаципе изобретени ĕçне вăйлатсах пырассишĕн

Октăбĕрти Социализăмла революци ĕçхалăхне пусмăртан хăтарни халăх таланчĕсене ӳссе чечекленме пысăк условисем туса пачĕ. Пирĕн Совет çĕршывĕ талантсен çĕршывĕ пулса тăчĕ. Епĕр ăна изобретенипе рационализаци ĕçĕ ӳссе пынинчен те лайăх куратпăр.

Пуйан та кулјтурăлă пурнăç кунсерен çĕнĕ талантсем—изобретателсемпе рационализаторсем ӳстерсе пырат. Пирĕн республикре 1937 çулти август уйăхĕнче изобретателсемпе рационализаторсен ĕретĕнче 630 çын пулнă пулсан, халјхи вăхăтра 800 çын ытла шутланат. Изобретенипе рационализаци сĕнӳвĕсем парасси те ӳссех пырат. 1934 çулти йанварĕн 1-мĕшпе 1937 çулти йанварĕн 1-мĕшĕ хушшинче предприйатисенчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксем 3258 сĕнӳ панă. Пурнăçра усă курма тытăннă 996 сĕнӳ çулсерен 2524019 тенкĕ перекетлеме май панă. 1937 çулта 13 предприйати тăрăх панă 362 сĕнӳрен 143 сĕнӳве йышăннă. Вĕсенчен 113 сĕнӳве пурнăçа кĕртме тытăнни 326535 тенкĕ перекетлеме май парат.

Изобретенипе рационализаци сĕнӳвĕсен пахалăхĕ те лайăхлансах пырат. Панă сенӳсем техникăна вăйлатма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма пысăк майсем туса параççĕ. Çĕмĕрле комбинатĕнчи Илларионов стахановец шутласа кăларнă йавăç материалĕсене типĕтнĕ çĕре тийемели станок çулталăкра 1,5 мĕлйун тенкĕ перекетлеме май парат. Браксем тăвассине чакарат. Çĕмĕрлери „Болјшевик" завод 1937 çулта 19 сĕнӳве пурнăçа кĕртсе, 77.355 тенкĕ перекетленĕ. Кунашкал тĕслĕхсем пур предприйатисенче те пур.

Анчах, çапах та изобретенипе рационализаци ĕçĕ ăнăçлăн сарăлса пырат теме çук-ха. Рабочисен, инженерсен, техниксен сĕнӳвĕсем çине тĕлсĕр, бӳрократла пăхасси халĕ те пĕтмен. Сĕнӳсене вăхăтра пăхса тухманни, пурнăçа кĕртессине чăсса пыни изобретенипе рационализаци ĕçне вăйлатма чăрмантараççĕ.

1937 çулта панă сĕнӳсенчен 85 сĕнӳве халĕ те пăхса тухман. Вĕсем çине изобретателсен Совечĕ кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаст. Сĕнӳсене пăхса тухассине хăвăртлассишĕн тăрăшмаст.

Шупашкар вăрманпунктĕнчи слесăр Сидоров йулташ панă сĕнӳпе пурнăçра усă курма тытăннăранпа икĕ çул çитет ĕнтĕ. Анчах пайанхи куна çитиччен те Сидорова саккун тăрăх илмели укçана памаççĕ. Çĕмĕрле комбинатĕнчи Борисов йулташ преми укçине тĕрĕс шутласа паманни, панă сĕнӳве 7 уйăх тытса тăни çинчен пĕлтерет.

Фактсем изобретателсен Совечĕ, Халăх Комиссариачĕсем, хуçалăх тата профсойуз организацийĕсем изобретенипе рационализаци ĕçĕ çине йĕркесĕр пăхни çинчен калаççĕ. Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче ку тарана çитиччен те иртнĕ çулта илнĕ сĕнӳсене пăхса тухса пĕтермен. Апла пулин те, изобретателсен Совечĕ сĕнӳсене пăчлантарса тăракан çынсене ответ тыттарма хăйулăх çитермест. Облăçри тата предприйатисенчи профсойуз организацийĕсем изобретенипе рационализаци çине çиелтен кăна пăхаççĕ. Вăрман касакан тата вăрман йухтарнă çĕрти рабочисен сойузĕн облăçри Комитечĕ решени йышăннипех лăпланнă.

Изобретенипе рационализаци ĕçне вăйлатсах пыма кирлĕ условисем çителĕклĕ. Кунран кун вăйланса пыракан стахановла йухăм изобретателствăпа рационализаци ĕçне вăйлатма пысăк майсем туса парат. Стахановецсем—рационализаторсемпе изобретателсен тăван йултăшĕсем. Ку çапла, мĕншĕн тесен пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен стахановец вăл, — производствă техникине вĕренсе çитнĕ, хăйĕн ĕçĕнче çĕнĕ йĕркесемпе усă куракан çын. Апла пулсан, кашни стахановец рационализатор пулмала.

Предприйатисенчи изобретателсен Совечĕсен ĕçĕн тĕп никĕсĕнче стахановецсемпе сыхăнса ĕçлесси, рационализаципе изобретени ĕçне стахановецсене йышлăн йавăçтарасси пулмала. Изобретателствăпа рационализаци ĕçне стахановецсене ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшса, вĕсен опычĕсене санаса пыни тăрăх вăйлатса пымала. Пăллах, кунашкал тума партипе профсойуз тата хуçалăх организацисем тимлĕн ĕçлени кирлĕ.

„Чăваш коммунĕ" сырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 5 пус, 1 уйăха—2 т. 80 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 107 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 83. Тираж 15.500 58—83 см. 1—1 п. л.